Ҫавашопкомолĕ

*Пĕтĕм тĕнҫери пролеттарисем, пĕрлешĕр!*

148

Левгур

# Р.Ç.К.Л.С. ИСТОРИЙĔ

ТИТОВ куҫарнă

Ратактăрĕ М. ПЕТРОВ.

ҪĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР 1924 ç.

Ђ Ă В А Ш О П К О М О Л Ĕ

*Пĕтĕм тĕнтђери пролеттарисем, пĕрлешĕр!*

Левгур

# Р.Ç.К.Л.С. ИСТОРИЙĔ

ТИТОВ куçарнă

Ратактăрĕ М. ПЕТРОВ.

Ио12

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР 1924 ç.

Чувашоблит № 329. Напеч. 3.000

г. Чебоксары, Типография Чувашиздата.

## Çамрăксен кĕрешĕвĕ пуçланса кайни.

Ĕçлекен çамрăкĕсемпе çитĕннисем.

Хапрăксаватра ĕçлекен çамрăксем урăх классен çамрăкĕсенҫен паллах уйрăм тăраççĕ: вĕсем хăйсен тĕллĕн пурăнма пултараççĕ. Пĕҫĕк ҫухнех вĕсем хайар нуштапа кĕрешме вĕренеççĕ, вăхăтсăр вилмесен, вĕсем ĕçпе пиççе хастарлă пулаççĕ, хăйсен малашнехи пурăнăçĕшĕн тăрăшаççĕ. Вĕсем тĕрлĕ хапрăксаватсенҫе ĕçленĕ ҫух, хăйсен хуçисемпе, маçтăрĕсемпе кĕрешме вĕренеççĕ. Ĕçлекен çамрăксем пурĕ те пĕр пек шутлама, пĕрпĕриншĕн хута кĕме вĕренеççĕ. 1878 çулта çуркунне Ленĕнкрат хулинҫи пĕр пиравăр хапрăкĕнҫе ĕçлекенсем стаҫкă тунă ҫух, поҗитсси хапрăкра ĕçлекен аҫасене тытса уҫҫаска хупса лартнă. Кăна пĕлсĕн, вĕсенĕн çамрăк йулташĕсем ушкăнпа пухăннă та, хăйсен йулташĕсене хăтарма кайнă. Çапла çамрăк аҫасен темонстратсийĕ пулса тăнă. Ара çитнисем вĕсен темонстратсиве пĕри те хутшăнман, айакран кăна пăхса тăнă. Стаҫкă тăвакансем-аҫасем вĕсен хуралçи пулнă. Политсисем, йе касаксем килессине вĕсем шăршăпа пĕлнĕ пекех пĕлсе тăнă, вара пуху тăвакансене çинҫех систернĕ.

Ĕç халăхĕн çамрăкĕсем, 14—15 çултан пуçласа, хапрăксавăтсенче сотсиалтемократ крушокĕсене (ушкăнĕсене) кĕнĕ, ĕçлекенсемпе пĕрлех стачкăсенче, темонстратсисенче пикенсе ĕçленĕ. 19—20 çула çитсен, вĕсем ĕçлекенсен ушкăнĕсенче пуç пулса, вĕсене хăйсем хыççăн йертсе пынă. Çамрăксем пикенсе ĕçлени çакăнтан курăнать: 1903 султа Отессă хулинче политтĕккă тĕлĕшпе тĕрмере ларакан 105 çынтан 20 çула çитменни 30 çын пулнă. Йеккатеринпурк хулинче стачкă пуçĕнче тăракан 64 çынтан 20 çула çитменни 28 çын пулнă.

**Çамрăксен кĕрешĕвĕ 1917-мĕш çула çитеччен мĕншĕн хăватлă пулманши? Пур çĕрре те сарăлса çитменши?**

Ку акă çакăнтан килет. Вăл вăхăтчен пирĕн Раççейре патша саккунĕ тытăнса тăнă, çавăнпа та ку ĕçе вăйлăланса пыма кансĕрлекенсем нумай пулнă. 1. Çамрăксен ĕçĕ вăл пур çĕрре те сарăлса, мĕн пур çамрăксене пĕрлештерсен тин вăйланса кайма пултарать. Анчах 1917 çула çитеччен ку ĕçе патша политсинчен вăрттăн тумалла пулнă, çакăн пирки çак ĕç çамрăксене пĕтĕмпе пĕрлештереймен. 2. Патша саккунĕ ирĕк паман пирки, ун чухнехи револютси ушкăнĕсем вăрттăн ĕçленĕ. Çавăнпа та вĕсем хăйсен вăйĕсене салатасшăн пулман, çамрăксене те оркачисатсисем тутарса сапалантарма май килеймен. Çамрăксем ваттисемпе пĕрле ĕçленĕ. 1905-мĕш çулчен пур оркачисатсисенче те пуринчен ытла çамрăксем ĕçленĕ. Çакна пирĕн манма йурамасть.

Вёренекен çамрăксем хушшинчи ĕç.

Епĕр 1917-мĕш çула çитеччен пирĕн Рассейре ĕçлекен çамрăксен кĕрешĕвĕ (пурăнăçа улăштарса малалла пырас ĕç) вăйлăланса сарăлман терĕмĕр. Анчах вĕренекен интелекентлĕ çамрăксен хушшинче ĕç кун пек пулман. Тĕрлĕ шкулта вĕренекен çамрăксем пуринчен ытла вак пуршуасипе вăтам пуршуаси ачисем пулнă. Вĕсем ун чухнехи шкул йĕркисем питĕ усал пулнипе килĕшеймен. Вăл саманара шкул салтаксен касăрмипе пĕрех пулнă. Саккун «ирĕклĕх» кĕнекисене çапма ирĕк паман, кĕнекесене вуланăшăн ытĕ хытă тыткаланă. Вĕренекенсене тĕрлĕ крушоксене орканисатсиленме чарнă. Çапах та вĕренекен çамрăксем, култтурăран пулсан, ытти çамрăксенчен нумай малта тăнă. Шкулта вĕренекенсем ушкăнпа пурăннă, пĕрпĕринпе пĕрлешсе, хăйсем ĕçĕсем синчен шутласа пăхма пултарнă. Çавăнпа та çамрăксен ĕçĕ чăн малтан вĕренекенсен пăлхавĕсенчен пуçланса кайнă. Тата çакна астуса тăрас пулать: вĕренекен çамрăксем, савăтра ĕçлекен çамрăксем пек револютсионерсен ушкăнĕсемпе пĕрлешсе сыхăнса тăрайман. Çавăн пирки вĕренекен çамрăксен хăйсем тĕллĕнех тĕрлĕрен орканисатсисем тумалла пулнă.

1884-мĕш çулта «Халăх ирĕкĕ» (Народная воля) ятлă партти çамрăк револютсионерсем валли орканисатси тума тытăннă, анчах ку ĕç пулайман. Тата вĕренекен студентсем мĕнле ĕçленине пĕлес тесен, пирĕн

1876 çулсенҫе вĕсем халăх хушшине вĕрентме çÿренине, 1891 çулти выçлăхпа кĕрешнине, 1905 ç. пулнă револютси ĕçĕнҫе пулнине аса илес пулаҫ. Анҫах, студентсем ара çитнĕ пирки, хăйсен шухăшĕсемпе те çамрăксенҫен уйăрларах тăнă, ваттисем йеннелле туртăннă.

**Кăнтăрлари Рăççей çамрăкĕсен сойусĕ.**

1901 çулта Леңăнкратра, Тифлисра, Тонри Ростовра, Харккăвра, тата ытти хуласенҫе те вĕренекенсен органисатсийĕсем ĕçле пуçлаççĕ Рăççейĕн кăнтăрла йенҫе, 1902 çулта çак çамрăксен органисатсийĕсен пĕрремĕш сиесĕ пулнă. Вăл сиесре: Рăççейĕн кăнтăрла йенҫи вăтам шкулсенҫе вĕренекенсен ушкăнĕсен Тĕп (Центральный) Комиттетне суйланă. Иккĕмĕш сиесĕ 1903 çулта пулнă. Вăл вăхăтра çав органисатсире 500 çын йахăн тăнă; вĕсем 40 крушокра ĕçленĕ. Вĕсем пуринҫен ытла хăйсене хăйсем вĕренсе çуталас ĕçе тунă. Кунсăр пуçне тата, ку органисатсине кĕрекен йулташсем шкулти йĕркесемпе те кĕрешнĕ. Паллăрах йулташсем, ку ĕçсемсĕр пуçне, тата политтĕккă ĕçĕсене те тунă. Вĕсем тĕрлĕ револютсионерсем çырнă кĕнекесене, саккуна хирĕç пыма ҫĕнекен хутсене (прокламатсисене) машшинсемпе çапса, тĕттĕм халăх хушшине салатнă. Çак кăнтăрла йенҫи çамрăксен сойусĕ сотсиалтемократ партти майлă пулнă. Вăл органисатсисен иккĕмĕш сиесĕ ун çинҫен акă çапла калаҫ: Сиес пролеттарисен сотсиалисăмĕ вĕрентнине çамрăксем хушшине сармалла, тенĕ. Рăççейри ĕçлекенсен сотсиалтемократти парттийĕ анҫах

ку ӗҫе тӗрӗс тума пултарӗ, тенӗ. Ку майпа орканисатсийӗн сотсиалреволђутсионерсемпе те тавлашкаламалла пулнӑ. Вӗсем (ессерсем) ҫак орканисатсине политтӗккӑ ӗҫӗнђен айаккарах илсе кайса, унтан вӗренмелли (куԓтуралӑнмалли) орканисатси анђах тӑвас тенӗ. Анђах орканисатси вӗсем хыҫҫӑн кайман. Ку йенђен Кӑнтӑрлари Раҫҫейре сотсиалтемократтийӗн партти вӑйли курӑнса тӑнӑ. Тата ҫамрӑксене Сотсиалтемократти партти хыҫҫӑн кайма Ростов хулинђи 1902 ҫулта пулнӑ ђаплӑ стађкӑ пулӑшнӑ. Ҫак вӑхӑтра ӗҫлекенсен класӗ калама ҫук вӑйлӑланса ҫитнӗ. Сотсиалтемократсен парттийӗ вӗсен пуҫӗ пулса, вӗсем ҫине шанса, тӗрлӗ лосункӑсем кӑларса, питӗ вӑйлӑ ӗҫленӗ. Ҫавӑнпа та вӗренекенсем сотсиалтемократсен партти майлӑ пулнӑ.

**Парттипе вӗренекен ҫамрӑксем.** Раҫҫейри ӗҫлекенсен Сотсиалтемократти парттийӗн „Хӗлхем“ (Искра) йатлӑ хаҫађӗ ҫак вӗренекен ҫамрӑксем малалла пынине сӑнасах пӑхса пынӑ, мӗншӗн тесен, ҫамрӑксен орканисатсийӗсем револђутсионерсене питӗ пысӑк усӑ кӳнӗ. Ҫамрӑксен ушкӑнӗсем тӗрлӗ прокламатсисем тӗттӗм халӑх хушшине салатнӑ, унтан вӗсем револђутсионерсен ушкӑнӗсене ђылай вӗренсе, куԓтурлӑланса ҫитнӗ ҫамрӑксене парттире ӗҫлеме парса тӑнӑ. Вӗсем ун ђухне мӗнле ӗҫлени ҫинђен статйасем нумай ҫырнӑ („Кӑнтӑрлари Раҫҫейре вӗренекенсен Сойусӗ“ ӗҫлени ҫинђен ҫырни 5 пысӑк статйа пур, ытти орканисатсисем ҫинђен 70 статйана ҫитет). Вӑл статйасем

çинҫе ун ҫухнехи вӗренекенсен хушшинҫен ҫи лайӑххисем йепле ӗçлекенсемпе пӗрле кӑпиттала хирӗç тӑни çинҫен лайӑх çырса кӑтартнӑ. Патша саккунӗ шкулсенҫе крамол тени ан пултӑр тесе, питӗ тӑрӑшнӑ. Анҫах ку ӗç кунтан кунах вӑйлӑланса пынӑ. 1904-5 çулсенҫе нумай шкулсенҫе вӗренекенсен сапастовкисем пулнӑ. Çак вӗренекенсен кӗрешӳвӗ вӑйлӑланнине Раççейри ӗçлекенсен сотсиалтемократти парттийӗн иккӗмӗш сиесӗ палӑртнӑ. Вӑл, В. И. Леҫӑн йулташ каланӑ тӑрӑх, вӗренекенсен кӗрешӳвӗ çинҫен уйрӑм ресоҫутси (постановлени) йышӑннӑ. Вӑл постановлени çапла калаҭ: Раççейри ӗçлекенсен сотсиалтемократти парттийӗн иккӗмӗш сиесӗ вӗренекенсен хушшинҫе ревоҫутси ӗçӗ ҫӗрӗлсе, вӑйлӑланса пынине савса тӑраҭ.

Çамрӑксем орканисатсиленме тӑрӑшнине партти орканисатсисен пурин те мӗн пур вӑйпа пулӑшмалла. Сиес хӑйсен ҫленӗсене пуринҫен ытла вӗренекенсен ушкӑнӗсене, крушукӗсене Сотсиалисӑм шухӑшӗсене пӗлтерме калаҭ; пӗр йенҫен маркçисӑма (Карл Маркс вӗрентнине), тепӗр йенҫен Р а ç ç е й р и халӑхçӑсемпе (наротниксемпе) хыçал йенҫи Европпӑри оппортуниссем в ӗ р е н т н и н е танлаштарма калаҭ, мӗншӗн тесен, çаксем пирӗн вӑхӑтри ҫи паллӑ ревоҫутсин йухӑмӗсем. Унтан ӗç пуçламӑшӗнҫех пысӑк йӑнӑшсем тӑвас мар тесен, çамрӑксен орканисатсийӗсем, ӗç пуçласа йарас умӗн, сотсиалтемократсен орканисатсийӗсемпе çыхӑнса, канашлас пулаҭ, терӗ.

Вĕренекенсен 1900-пе 1917-мĕш çул хушшинҗи ĕçне тĕплесе пăхсан, акă мĕн калама пулаҭ: вĕсем вакă пуршуаçи майлăрах пулнă. Вĕсем пуринҗен ытла хăйсене хăйсем вĕрентес ĕçе анҗах ĕçленĕ. Апла пулин те вăл орканисатсисенҗен пумай револютсионерсем-комунистсем тухнă.

**Хапрăксавăтра ĕçлекен çамрăксен малтанхи орканисатсийĕсем.**

Епĕр 1917-мĕш çулҗҗен хапрăксавăтра ĕçлекен çамрăксен орканисатсийĕсем пулман, вĕренекенсен орканисатсийĕсем анҗах пулнине куртăмăр. Ĕçлекен çамрăксен 1903—1906 çулсенҗи Пунт (Бунд) çумĕнҗе тăракан Поҗшăпа Украйнăри орканисатсийĕсем çеç пулнă, вĕсене çамрăксен пунтҗĕ Йукен-Пунт (Юген-Бунд) тенĕ. Унтан Поҗшăра „Малалла пуласси“ („Будущность“ —Цюкунфт) йатлă орканисатси пулнă, вăл 1909—1914 çулсенҗе ĕçленĕ. Çак орканисатсисем вĕренекенсен орканисатсисенҗен уйăрăм тăнă: вĕсем пуринҗен ытла револютси çинҗен тĕттĕм халăх хушшинҗе ăнлантарса çӳренĕ, ĕçлекенсемпе пĕрле темонстратсисенҗе ĕçленĕ, хăйсем тĕллĕн те тунă. Ун çинҗен çак орканисатсисен пуçĕ пулса тăнă йулташсем акă çапла калаççĕ: Поҗшăра патша реаксийĕ пит хайарланса çитнĕ вăхăтра, ĕçлекенсен орканисатсийĕсене лăҗах тунă вăхăтра, малта вăрçа пыракан җăн ырă револютсионерсене йе тыта тыта хупнă, йе çака çака вĕлернĕ вăхăтра ĕçлекен çамрăксем хăйсем йаҗейккăсем (пĕҗĕк ушкăнсем) тунă. Кайрантарах револютси ĕçĕ җĕрĕлсе вăйланарах пар-

сан, çак йаҫейккӑсенҫен маттур, çирӗп, вӑйлӑ орканисатсисем пулса кайнӑ. Пӗрпӗрне сотсиалисӑм çинҫен вӗрентекен крушоксене, Поҫшӑпа Литвари политси çӗмӗрсе п[illegible]тереймен çамрӑксен орканисатсисене, тата йеврейсен „сотсиалисӑмлӑ пролеттари çамрӑкӗсем" тейекен орканисатсисене пӗрлештерсе „Малалла" (Будущность) йатлӑ çамрӑксен орканисатсине тунӑ. Вӑл нунумайҫҫен вӑйлӑн ӗçлесе пынӑ. 1909—1910 çулсенҫе çу уйӑхӗн пӗрремӗш кунне мӗн пур ӗçлекенсен орканисатсийӗсем, политси аркатса пӑрахнӑ пирки, нимӗн тума та пултараймарӗç. Пӗр „Малалла" анҫах вӑл кунсенҫе ӗçлекенсене капиталисӑмпа кӗрешме ҫӗнекен хутсем кӑларнӑ. „Малалла" вӑл хапрӑксавӑт çамрӑкӗсен первейхи орканисатсийӗ пулнӑ. Вӑл орканисатсирен пирӗн краштӑн вӑрçи вӑхӑтӗнҫе паллӑ çынсем нумай тухрӗç. Поҫшӑра халӗ те „Малалла" йатлӑ икӗ орканисатси пур; вӗсенҫен çурри ытла комуниссем хыççӑн кайрӗç, йулашкисем сотсиал-патриотсем хыççӑн кайрӗç.

Епӗр пӗлетпӗр, кунта калана орканисатсисемсӗр пуçне, хапрӑксавӑтсенҫе таса çамрӑксен урӑх орканисатсийӗсем те пулнӑ. Нарӑс уйӑхӗнҫи револютси умӗн Питӗрте Путтиловскипе Лесснер савӑҫӗсенҫе, тата Украйнӑра çамрӑксен крушокӗсем пулнӑ. Лесснер савӑтӗнҫе çамрӑксем ваттисенҫен уйрӑм стаҫкӑ тунӑ. Кейӳ хулинҫе те çавӑн пекех пулнӑ. Вӑл хулара тимӗр тавраш савӑҫӗсенҫе ӗçлекенсен сойусӗ çумӗнҫе çамрӑксен

хăйсен тĕреклĕ ушкăнĕ пулнă. 1917-мĕш çулта вăл ушкăн çăмрăксен сойусне пуçласа йараканни пулнă. Тата Отес хулинҫе 1917-мĕш çулта Сотсиалтемократсен крушокĕсем пулнă. Ќайрантарах вĕсем ĕçлекен çамрăксен сотсиалисăмла сойусне пуçласа йанă.

**Нурăс уйăхĕнҫи револютси.**

Çамрăксен ĕçĕ нурăс уйăхĕнҫи револютси хыççăн тин вăйлăланса сарăлма пуçланаҫ. Нурăс уйăхĕнҫи револютси хыççăн, хапрăксавăтра ĕçлекен çамрăксем култтурăпа политтĕкă тĕлĕшĕнҫен калама çук çĕкленсе пыраççĕ. Çак револютси хыççăн çамрăксене ĕçлеме кансĕрлекен йапаласем пĕтрĕç. Револютси çамрăксене култтурăланса пыма, тата политтĕкăпа екKономиккă кĕрешӳвĕнҫе кĕрешме май паҫĕ. Вăл вăхăтра çамрăксем хăйсем тĕллĕн анҫах ĕçленĕ, мĕншĕн тесен, ытти ĕçлекенсен орканисатсийĕсем политтĕкă ĕçне тытăнса кăпитталисăмпа кĕрешнĕ вăхăтра, çамрăксене пулăшу пама пултарайман. Çавăнпа та çамрăксен ĕçĕ, ытти политтĕккă орканисатсийĕсемпе пĕрлешмесĕр, нумайҫҫен хăй тĕллĕнех пынă. Пирĕн Раççейри çамрăксен оппыт (сăнав) пулман пирки, вĕсем хăйсен орканисатсине мĕнле формăпа тумалла майне шыранă. Тĕрлĕ çĕрте çамрăксенĕн орканисатсийĕсем çакăн пирки тĕрлĕрен пулнă. Вĕсенҫен паллăраххисем Питĕрпе Мускав орканисатсийĕсем пулнă. Вăл хуласенҫе çамрăксен орканисатсийĕсем мĕнле пуçланса, мĕнле ĕçленине малалла каласа кăтартăпăр. Çак

орканисатсисем питӗ вӑйлӑ пулнӑ, вӗсем кайран пирӗн капаш ирӗкне краштан вӑрҫинҫе нумай пулӑшнӑ.

**Питӗртти ҫамрӑксен орканисатсисем.** Леҥӑнкратри (Питӗрти) ҫамрӑксен ӗҫӗ хапрӑксавӑтсенҫе ҫамрӑк ушкӑнӗсем (коллективсем) тунипе пуҫланса кайнӑ. Ку ушкӑнсем ҫамрӑксен пурӑнӑҫне екномикӑ йенҫен тата вӗрентес тӗлӗшрен лайӑхлатасшӑн пулнӑ. Ҫакӑн пек ҫамрӑксен ушкӑнӗсем Питӗрте кунтан кун йышлӑланса пынӑ. Ҫӗртме уйӑхӗ умӗн (1917-мӗш ҫулта) пӗр Выпорк йенҫех (Выборгская сторонарах) ӗҫлекен ҫамрӑксем пурӗ вунӑ пине (10.000) йахӑна пӗрлешше ҫитнӗ. Вӑл орканисатсисем вӑйлӑ пулнӑ. 1917-мӗш ҫулта ҫу уйӑхӗн пӗрремӗш кунӗнҫе пулнӑ темонстратсире ҫамрӑксем уйрӑм ушкӑнпа хӑйсен лосункисемпе пынӑ; Марс уйӗ (Марсовое поле) тенӗ ҫӗрте вӗсем Раҫҫейри ҫамрӑксен первейхи митинкине туса ирттернӗ. Ҫак вӑхӑтра Выпорк йенҫе районра ҫамрӑксенӗн „Ӗҫпе Ҫутӑ“ йатлӑ орканисатсийӗ пуҫланса кайнӑ. Вӑл орканисатси пуҫӗнҫе пӗр липерал—Шевцов ӗҫленӗ. Кун хыҫҫӑн ытти районсенҫе те ҫакӑн пек ушкӑнсем орканисатсилене пуҫланӑ. Вара Питӗр хулинҫи мӗн пур орканисатсисен пуххи пулнӑ. Унта мӗн пур районсенҫи, хапрӑксавӑтсенҫи орканисатсисен телекаҫӗсем пынӑ (пуху Рено савӑтӗнҫе пулнӑ). Унта Питӗр хулинҫи ҫамрӑк пролеттарисен орканисатсийӗсен канашне суйланӑ. Вӑл орканисатсисене „Ӗҫпе Ҫутӑ“ йатлӑ хунӑ. Вӑл орканисатси

çакăн пек прокраммă йышăннă (прокраммăн паллă вырăнĕсене кунта кӳртетпĕр):

1. Пролеттари çамрăкĕсем хăйсен ирĕкĕпе тивĕçлĕхпе вĕренсе, çутăлса, пĕлсе сыхлаççăр;

2. Малашне пролеттари пулас çамрăксем вĕренсе ăстана тухнă спетсиалистсем пулççăр;

3. Пролеттари çамрăкĕсем политтĕккă тĕлĕшĕнçен тĕ, економиккăпа саккун тĕлĕшĕнçен те пĕрпĕриншĕн пĕрлешше хытă тăракан пулççăр;

4. Вĕсенĕн хăйсенĕн тивĕçлĕхĕ кăмăлĕпе пролеттари класĕн шухăшĕсем çирĕпленçĕр, мĕншĕн тесен, вĕсем техниккăпа профеççи йенçен вĕренсе çутăлса çитсен, пĕрлешше орканисатсиленсен, ĕçлекен класăн тĕрекĕ пулаççĕ;

5. Пролеттари çамрăкĕсем кăмăлне хитрелĕхпе ăслăлăха цĕлççĕр, вĕсем илемлĕхе йуратакан пулççăр;

6. Ĕçлекен çамрăксем вăйлă, сывлăхлă пулççăр тесе, вĕсене сывлăхлă тăвакан, вăй кӳртекен вăйăсене йуратакан тăвас пулаť;

7. Раççейри пролеттари çамрăкĕсем пурĕ те пĕрлешçĕр те, хĕвеланăçри, Çĕнĕ тĕнçери—Америкри, тата ытти çĕрти çамрăкĕсемпе, пуринçен ытла славен çамрăкĕсемпе пĕрле ĕçлесе, çутта тухма, кăпитталисăмпа кĕрешме, пĕтĕм тĕнçипе сотсиалисăм пултăр тесе тăрăшçăр;

Çак малта кăтартнине туса çитермешкĕн, пур районсенçи пролеттари çамрăксене „Ĕçпе Çутăшăн" пĕр-

лештерсе орканисатси канашĕпе комиттеђĕ çак тĕрлĕ ĕççемшĕн тăрăшаҭ:

1. Шкулта вĕренсе çутта тухас ĕçшĕн;

2. Науккăсене, промышленнăçпа ремеслесене вĕренес ĕçшĕн;

3. Пĕрпĕриншĕн хута кĕрсе, пурăнăçа лайăхлатас ĕçшĕн;

4. Илемлĕх, çырулăх ĕçне вĕренсе, кĕпекесем кăларас ĕçшĕн;

5. Илемлĕх искуствине вĕрентес ĕçшĕн;

6. Çамрăксен ÿтпÿне çирĕплетес ĕçпеле, науккă кăтартнă тĕрлĕ спорт ĕçĕшĕн;

7 Килçурт тытас ĕçпеле киђти хÿçайствă ĕçĕшĕн тата çĕр ĕçĕшĕн;

8. Метикко-саниттари ĕçĕшĕн;

9. Финанспа копператси ĕçĕшĕн;

10. Хапрăксавăтра тăман пролеттарисене пĕрлештерес ĕçшĕн;

11. Хресђен çамрăкĕсемпе пĕрлешес ĕçшĕн;

12. Орканисатси ĕçĕсене туса тăрассишĕн т. ыт. те.

Çакăнтан өпĕр „Ĕçпе Çутă“ орканисатси мĕнле ĕççем тăвас тенине лайăх куратпăр.

Анђах „Ĕçпе Çутă“ орканисатси хушшинђе пăлхав ђасах пуçланса кайнă. Револютсиленнĕ çамрăксем орканисатси пуçĕнђе тăракан Шевтсовпала унăн майлă пыракан ђленсемпе кĕрешме пуçланă. Вара Нарвăпа Нева районĕсем унган уйăрăлса тухнă. Вĕсен хушшинђи тавлашу политтĕккă тĕлĕшĕнђен килĕшеймен пирки тухса кайнă

Ҫӗртме уйăхӗнҫе Питӗрте Уҫретиттӗлни Сопранине суйлакан комиттет ӗҫленӗ. Ҫавăнта ҫамрăксене Уҫретитӗлни Сопранине суйлама миҫе ҫултан пуҫласа ирӗк памалли ҫинҫен калаҫнă. Поҍшевиксем ҫамрăксене 18 ҫул тултарнисене суйлама ирӗк памалла тенӗ; меншевиксем 20 ҫулхисене тенӗ; катетсем 23 ҫулхисене, тенӗ. Комиттет меншевиксем каланине йышăннă. Ҫак йышăннă постановленине хирӗҫ пырас тӗлӗшпе, ҫӗртме уйăхӗн 22 ҫислинҫе ӗҫлекен ҫамрăксен сопрани пулнă. Вăл сопрани 18 па 20 ҫул хушшинҫи ҫамрăксене суйлама ирӗк паман постановленине хирӗҫ пымалла тунă. Тата ӗҫлекен ҫамрăксене пӗрлештерсе тăракан сотсиалисăмлă сойус тумалли постановлени йышăннă та, Пӳро суйланă. Пӳрона ҫак йулташсем кӗнӗ: Леске, Рывкин, Пылаев. Вӗсем пур те партти ҫленӗсем пулнă. Утă уйăхӗн пӗрремӗш кунӗнҫе „Мотери" йатлă ҫырккăра ӗҫлекен ҫамрăксен миттинкӗ пулнă. Унта 2.000 ҫынна йахăн ҫамрăк пухăннă. Ҫак миттинкăра ҫи малтан пролеттари ҫамрăкӗсен хăйсен класӗн прокрамми палăрнă. Вӗсем миттӗнкăра: ҫамрăксене сотсиалисăмшăн кӗрешме вӗрентмелле, тенӗ. Ҫурла уйăхӗн 18 (31) кунӗнҫе Питӗрти пур ҫамрăксен орканисатсийӗсем конференси тунă. Унта 170 телекат пулнă. Вӗсене 16.000 ҫамрăксем суйласа йанă. Вăл конференси Керенски влаҫӗнҫен пытанса пурăнакан Ленӗн йулташа, тата тӗрмӗре ларакан Тротски йулташа салам йанă. Конференси „Ӗҫпе Ҫутă" орканисатсисене салатса, унăн вы-

рӑнне „Ӗҫлекен ҫамрӑкӗсен сотсиалисӑмлӑ сойусӗ“ туса хунӑ. Конференсинҫе „Ӗҫпе Ҫутӑ“ орканисатсийӗ пӗтӗмпех пулнӑ. Вӑл хӑйне хӑй пӗтермелле тесе постановлени йышӑннӑ. „Ӗҫлекен Ҫамрӑксен сотсиалисӑмлӑ Сойусӗн“ малтанхи кунсенҫех политтӗккӑ ӗҫне вӑйлӑ ӗҫлемелле пулнӑ. Вӑл йуна уйӑхӗнҫи револютсинҫе, Туттовпа (Дутов) тата Калетинпа вӑрҫнӑ ҫух, питӗ тӑрӑшша вӑйлӑ ӗҫленӗ. 1918 ҫулта нарӑс уйӑхӗнҫе Кермаҫи ҫарӗ Раҫҫей ҫӗрӗ ҫине кӗрсе пынӑ ҫух, „Питӗрти ӗҫлекен ҫамрӑксен сотсиалисӑмлӑ сойусӗ“ хӑйӗн комиттеҫӗпе пӗрлех вӑрҫа тухса кайнӑ. Кун пирки Питӗр орканисатсийӗ питӗ наҫарланса пӗтсех ларнӑ. Ҫавӑнпа та ӑна 1918 ҫулта ҫу варринҫе ҫӗнӗрен орканисатсилемелле пулнӑ. Вӑл вӑхӑтра пур районсенҫе те ҫамрӑксен клупӗсем, вӗренмелли шкулӗсем уҫӑлнӑ; тата вӑрҫӑ ӗҫне те вӗрентнӗ. 1918-па 1919 ҫулсенҫе пӗр майах мопилисатсисем пулнӑ. Питӗр хули вӑрҫӑ ваҫҫи нумай ҫамрӑксене панӑ, Канаш Ирӗкне нумай пулӑшнӑ. 1917 ҫулта, ҫӳк уйӑхӗнҫе Питӗрте „Ҫамрӑк пролеттари“ йатлӑ хаҫатӑн пӗрремӗш нумӗрӗ тухнӑ. Кунтан кайарах Питӗрти комиттет ытти ҫамрӑксен орканисатсийӗсемпе ҫыхӑннӑ, пӗтӗм Раҫҫейри Урал тавранӗнҫе те, ытти ҫӗрте те орканисатсисем ҫакӑн пекех пулса пынӑ. Анҫах Мускавра апла пулман, урӑхларах пулнӑ.

**Мускаври ҫамрӑксен ӗҫӗ.** Мускаври ҫамрӑксен сойусӗ 1917-мӗш ҫулта ҫӗртме уйӑхӗнҫе Раҫҫейри ӗҫлекенсен-

сотсиалтемократсен парттийĕ Мускаври комиттеҫĕ ҫумĕнҫе пуҫланса кайнă. Вăл сойус патша вăхăтĕнҫе вăрттăн маркҫисăма (Карл Маркс вĕрентнине) вĕренекен крушокран пуҫланса кайнă. Унта партти ҫленĕсемпе соҫувствуйушҫисем (партти ĕҫне тĕрĕс тесе шутлакансем) анҫах кĕме пултарнă. Малтанхи сопранинҫе (ҫĕртме уйăхĕн 11 (24) кунĕнҫе) пĕтĕмпе те 30-40 ҫлен анҫах пулнă. П ă р т а к тăрсанах, вăл сойус 30-40 ҫынтан 200 ҫынна ҫитнĕ. Вăл сойуса хапрăксавăтра ĕҫлекенсен пĕр йаҫҫейки анҫах кĕнĕ (60 ҫын). Вăл сойус партти хушнă ĕҫҫене туса пынă. Вăл мĕнле ĕҫҫем туни ҫинҫен йулташ А. Л. Шатскин акă ҫапла калаҫ: Епĕр ун ҫухне тем тĕрлĕ ĕҫҫем те, тем тĕрлĕ хушнисене те тунă: партти кĕнекисене урамсенҫе, тĕрлĕ пухусенҫе сутас ĕҫе орканисатсиленĕ, тĕрлĕ ҫĕре суйламалли вăхăтра урамсенҫе акитатсилесе ҫӳренĕ (куншăн пирĕн ӳтпӳ те кăвакаркаласа пăхнă), ӳнтан тата партти тăвакан темонстратсисене те ҫӳренĕ, тет.

1917 ҫулта Мускав хыҫĕнҫи районри ĕҫлекен ҫамрăксен сойусĕ „Виҫҫĕмĕш Интернатсионал“ пуҫланса кайнă. Унăн пур пысăк хапрăксавăтсенҫе хăйĕн йаҫҫейкисем пулнă. Ăна пуҫарса йаракан йулташсем каланă тăрăх, вăл орканисатсире ҫамрăксем пĕр пин патне ҫитнĕ. Ку Мускаври икĕ орканисатсине пĕрлештерес тесе сăмах татсассăн, хулари ытти районсенҫе те 3-мĕш Интернатсионал орканисатсисем пула пуҫланă. Йулашкинҫен йупа уйăхĕн виҫҫĕмĕш кунĕнҫе (1917 ҫ.) Мус-

кавра хăйсен малтанхи конференцинҫе Виççĕмĕш Интернатсионал йатлă Мускаври ĕçлекен çамрăксен союçĕ пулса тăнă. Вăл вăхăтра çак оркани сатсине 2000 ытла çамрăк кĕнĕ. Йупа уйăхĕн 13 кунĕнҫе „Çамрăксен Интернатсионалĕ“ йатлă шурналăн пĕрремĕш нумĕрĕ тухнă. 15 ҫислара Мускаври çамрăксен малтанхи темонстратсийĕ пулнă. Вăл темонстратси пĕтĕм тĕнҫери çамрăксен кунне асăнса тунă Раççейри ҫăн малтанхи темонстратси пулнă. Мускаври йупа уйăхĕнҫи çапăçусем вăхăтĕнҫе оркани сатси ҫленĕсем пур те хăйсен районри хĕрлĕ çар хушшинҫе ĕçленĕ. Кун хыççăн пулнă „канлĕ ĕç“ нумайах пыман. Оркани сатси ҫленĕсем нумайĕшĕ Тонпа Украйнăна кайнă. Ун хыççăнах Кермаҫи çарĕсем Раççей çĕрĕ çине килсе кĕре пуçланă, унтан Престри ĕç пуçланса кайнă. Çапла Мускаври çамрăксен оркани сатси Питĕрти пекех саланса кайнă. Çавăнпа та ăна çуркунне çĕнĕрен оркани сатсилемелле пулнă.

Ытти çĕрти оркани сатсисем Раççейре Питĕрпе Мускаври пекех пулнă.

**Йалти çамрăксен ĕçĕ.** Йалсенҫи хресҫен çамрăкĕсен хушшинҫе пуринҫен ытла вĕренмелли (куҫтурланмалли) ушкăнсем пулнă. Вĕсене фронтран килекен салтаксем, йе йалсенҫи вĕреннĕрех сынсем пуçласа йанă. Йупа уйăхĕҫҫен вĕсем лайăх оркани сатсиленсе çитеймен. Крушоксене пуйанрах хресҫен аҫисем анҫах кĕркеленĕ. Ҫухăн хресҫен аҫисем кĕрсех кайман.

**Йупа уйăхĕпе çамрăксем.** Йупа уйăхĕнҫи революци çамрăксен крушокĕсемпе тĕрлĕ орканисатсисен ĕçĕсене пĕтĕмпех улăштарса пăрахнă. Унҫен ĕçлекен çамрăксен ҫăн малтан кăпитталисăм йĕркине пĕтермелле пулнă, çавăнпа та çамрăксем мĕн пур ĕçлекенсемпе пĕрле пур темонстратсисенҫе, стаҫкăсенҫе, сапастовкăсенҫе пикенсе ĕçленĕ. Влатимĕр Илйиҫ Леҫăн революци тăвас умĕн çамрăксене хытă шанса тăнă. Вăл Парттин Тĕп Комиттетне, йупа уйăхĕнҫи революцине йепле тумалли çинҫен йанă çырувĕнҫе, ĕçлекен çамрăкĕсем революци кĕрешӳвĕнҫе ăçта пулмаллине кăтартса панă. Вăл акă çапла калаҫ: „Востани тунă ҫух, ҫи кирлĕ вырăнсене (пунктсене) тытса илмешкĕн, тата ҫăн пысăк ĕççем тумашкăн, парттири ҫи харсăррисенҫен, унтан хапрăксавăтра ĕçлекен çамрăксенҫен (ку сăмахсене Влатимĕр Илйиҫ Леҫăн айалтан туртса паллă тунă), тата ҫи лайăх матроссенҫен уйрăм отретсем тумалла," тенĕ. Ҫăнах та, ĕçлекен çамрăксем В. И. Леҫăн ĕмĕтне çитернĕ. Вĕсем йупа уйăхĕнҫе пикенсе ĕçленĕ. Йупа уйăхĕнҫи революци хыççăн çамрăксен паррикатăсем çинҫе вăрçас вырăнне тата милиттарисăмпа кĕрешсе, кив çарсене аркатса пăрахас вырăнне, пролеттари тиктатурĕне сыхламалла пулнă тата çĕнĕ хĕрлĕ çар тумалла пулнă, – стаҫкăсем, сапастовккăсем тăвас вырăнне, канаш ирĕкне çирĕплетсе, тытăм йĕркине орканисатсилемелле пулнă. Çамрăксем вăл ĕçе те тумасăр хăварман.

Йалсенђи хресђен çамрăкĕсем хушшинђе, йупа уйăхĕнђи револђутси хыççăн ђухăнсемпе пуйанраххисем уйăрălса кайаççĕ. Вăл вăхăтра йалсенђе ђухăн хресђенсем пуйан кулаксемпе кĕрешме „ђухăнсен комитеђĕсене" тунă. Вĕсене тĕрек парса тăраканнисем—пуринђен ытла фронтран таврăннă салтаксем пулнă, унтан ђухăн çамрăкĕсем. Çак вăхăталла йалта çамрăксен крушокĕсем пулма пуçлаççĕ. Вĕсем пурăннă çемĕн „Полђшевиксен" тĕслĕрех пулса пыраççĕ.

**Çамрăксен сойусĕпе партти.**

Пирĕн Раççейре çамрăксен орканисатсийĕсем парттин орканисатсийĕсенђен уйрăм пуçланса кайнă. Вĕсем пурăна киле анђах комунислă орканисатси пулса пынă, мĕншĕн тесен, ĕçлекен çамрăксем хăйсен орканисатсийĕсем мĕнле пулассине малтанах пĕлме пултарайман. Унăн çинђен вĕсем ĕçленĕçемĕн анђах вĕренсе пыма пултарнă. Çапах та çамрăксенпе партти орканисатсийĕсем хушшинђе пĕрлешў пулнă, мĕншĕн тесен, çамрăксен сойусĕсен пуçĕнђе ĕçлекен паллăрах йулта'псем нумайĕшĕ Р. Ĕ. С. Т. П. ђленĕсем пулнă. Тепĕр йенђен, партти çамрăксен орканисатсийĕсем мĕнле пулнине, мĕн ĕçленине питĕ лайăх пĕлсе тăнă, анђах çамрăксем орканисатсиленнĕ ĕçе хутшăнман. Кун çинђеп Р. Ĕ. С.-Т. П. улттăмĕш сйесĕ йышăннă постановлени питĕ паллă. Вăл сйес малалла партти орканисатсисен çамрăксен орканисатсийĕсем çине хытăрах пăхас пулаť; çамрăксем орканисатсиленнĕ ђух парттин опекун пек пулма йу-

рамасӳ; парттин ҫамрӑксем хӑйсем тӗллӗнех орканисатсиленҫҫӗр тесе тӑрӑшмалла, ҫамрӑк ушкӑнӗсем пуҫланса кайнӑ ҫухнех сотсиалисӑмпа комунисӑм шухӑшӗсене йышӑнҫҫӑр та, ҫамрӑксен интернатсионалне пӗрлешҫӗр, вӗсем те сотсиалисӑм ӗҫне туҫҫӑр тесе тӑрӑшмалла, тенӗ.

**Ӗҫлекен ҫамрӑксем пуршуаҫипе килӗшекен парттисем хыҫҫӑн каймаҫҫӗ.**

Йупа уйӑхҫен те, унтан ка..ран та вакӑ пуршуаҫи парттийӗсем (сотсиалреволютсионерсем, меншевиксем) ҫамрӑксен орканисатсисене хӑйсен пуршуаҫипе килӗшмелли ҫулӗпе илсе кайма нумай тӑрӑшнӑ. Анҫах ку ӗҫсем вӗсен нихӑҫан та ӑнса пыман: ҫамрӑк ӗҫлекенсем вӗсен хыҫҫӑн кайман, вӗсем комуниссен парттийӗ хыҫҫӑн кайнӑ. Вӗсем мӗншӗн апла тунӑши? Ҫакӑн ҫинҫен пӑртак шутласа пӑхарха. Шутлакаласан, епӗр ҫакна куратпӑр: ӗҫлекен ҫамрӑксем вӗсем пролеттари класӗн аҫисем. Ҫавӑнпа та вӗсем пролеттари парттипе пӗрлех (комун. партти) кӑпитталисӑмран ҫӑлӑнас ҫулпа каймалла пулнӑ; вӗсем хӑйсене „Темократти саккунӗсемпе“ улталама паман. Сакӑр уйӑх пурӑннӑ „Вӑхӑтлӑх Правиттӗлства“ ӗҫлекен ҫамрӑкӗсен пурӑнӑҫне лайӑхлатас тесе нимӗн те туман. Кӑпитталисӑм йӗрки пулнӑ ҫух, пуршуаҫи ҫамрӑксене питӗ хытӑ ӗмсе пурӑннӑ, ҫавӑнпа та ҫамрӑксем пуршуаҫипе килӗшӳ тӑвакан парттисем хыҫҫӑн кайма пултарайман. Нарӑс уйӑхӗнҫи револютси ҫамрӑксен пурӑнӑҫне лайӑхлатса вӗсене вӗрентес ӗҫ пролеттари тиктатурӗсӗр пул-

ас çуккине лайăх кăтартса панă. Пуринҫен ытла вăл Украйнăра, Çĕпĕрте, Круçире лайăх курăнса тăнă. Çавăнпа та ĕçлекен çамрăксем кирекхăçан та Р. Ĕ. С.-Т П. (хаҫ Р.К.П.) хыççăн кайса комунисланса пынă. Сăмахран каласан, Отессă хулинҫи çамрăксен орканисатсийĕ йепле уйăрăлса кайнине пăхар: 1918 çулта утă уйăхĕн варринҫе (ун ҫухне Отессă шуррисен алинҫе пулнă). Отессăри ĕçлекен çамрăксен сотсиалисăмлă сойусĕнҫен меншевиксемпе сотсиал-револютсионерсем майлисем пур те уйăрăлса тухса кайнă. Анҫах хапăрксавăтри ĕçлекен çамрăксем пур те çĕнĕрен орканисатсиленнĕ, Çамрăксен Комунислă Сойусĕ хыççăн кайнă. (Вăл сойус ун ҫухне вăрттăн ĕçленĕ). Кун пеккийех Çĕпĕрте те, ытти çĕрте те пулкаланă.

Тата хăшхăш çĕрте меншевиксемпе сотсиал-револютсионерсен, йе анархислă çамрăксен сойусĕсем пулкаланă. Вĕсене вĕреннĕ çамрăксем (интелекентсем) анҫах кĕнĕ. Çавăнпа вĕсене кунта асăнни те çитĕ.

Кусемсĕр пуççăр тата *„скаутсенпе толстовтсăсен“* крушокĕсем пулнă. Анҫах вĕсем ҫасах пĕтнĕ. Хаҫ Раççейри Çамрăксен Комунислă Сойусĕ ĕçлекенсемпе хреçҫен çамрăкĕсен пĕртен пĕр орканисатсийĕ пулса тăрать.

**Пĕтĕм Раççейри çамрăксен орканисатсийĕсен первейхи сиесне пухма хатĕрленни**

Çамрăксен ĕçĕ çирĕпленсе, вăйлăланса çитсен, пĕтĕм Раççейри çамрăк орканисатсисене пĕрлештерме кирли курăнса тăма пуçланă. 1917—1918 çул-

сенҫе нумай кӗпӗрнесенҫе ӗҫлекенпе хресҫен ҫамрӑкӗсен сйесӗсем пулса иртнӗ. Тата Питӗрпе Уралра оплӑҫ сйесӗсем иккӗ пулнӑ. Ҫапла пӗрлештерес ӗҫе тума вӑхӑт ҫитнӗ. Ҫакӑ пысӑк ӗҫе тума Питӗрпе Мускаври ҫамрӑксенӗн орканисатсисем тытӑннӑ. Вӗсем Раҫҫейри ҫамрӑксен орканисатсисен сйесне пуҫтарма Пӳро суйланӑ. Ку ӗҫе тума Н. К. Крупскайа нумай пулӑшнӑ

1918 ҫулта йупа уйӑхӗн 29 кунӗнҫе Пӗтӗм Раҫҫейри ӗҫлекен ҫамрӑксенпе хресҫен ҫамрӑкӗсен пӗрремӗш сийесӗ уҫӑлнӑ.

## Ҫамрӑксемпе краштӑн вӑрҫи. Сойусӑн малтанхи ӗҫӗсем.

**Раҫҫейри ҫамрӑксен пӗремӗш сйесӗ.** Раҫҫейри ӗҫлекенпе хресҫен ҫамрӑкӗсен пӗремӗш сйесӗ Раҫҫей Респулӗкӗнҫи Ҫамрӑксен малалла пырас ӗҫӗн никӗсне хунӑ. Сйеса 120 ҫамрӑк орканисатсирен йанӑ телекатсем 175 ҫын пынӑ. Вӑл 120 ҫамрӑксен орканисатсисене 22,000 ӗҫлекен ҫамрӑксем кӗнӗ. Вӑл 175 телекатсенҫен ҫурри Раҫҫейри Комуниссен Парттин ҫленӗсем пулнӑ; меншевиксем 3 ҫын пынӑ, тата пӗр сулахай сотсиалреволҫутсионер пынӑ. Сйесӗн тӗп ӗҫӗ сойуса орканисатсилесси пулнӑ. Йупа уйӑхӗн 31-мӗш кунӗнҫе пулнӑ саҫҫетанинҫе сйес ҫакӑ теҫиссене (положенисене) йышӑннӑ:

1. Сойус Раҫҫейри комуниссен партти прокрамӗпе пӗр шухӑшлӑ. Вӑл ӗҫлекенпе хресҫен ҫамрӑкӗсене Ка-

наш Республёкшён ĕçлеттерме тăрăшаҫ, тата комунисăм шухăшĕсене халăх хушшинҫе сарма тăрăшаҫ.

2. Сойус никама та пăхăнса тăми çамрăксен орканисатси пулаҫ;

3. Сойус „*Раççейри Çамрăксен Комунислă сойусĕ*" йатлă пулаҫ.

Первейхи пунктăна сйес йышăнна ҫух, икĕ телекат анҫах тытăнса тăнă, ыттисем пур те йышăнна; иккĕмĕш пунктăна пур телекатсем те йышăнна, виççĕмĕш пунктăна 63 телекат йышăнна, 17 çын тытăнса тăнă, 6 телекат йышăнас мар тенĕ. Çакă сйесре Раççейри Комуниссен парттипе пĕрле ĕçлесси çинҫен тавлашу мĕн пулман. Сойуса йат хунă ҫух анҫах пăртак тавлашкаланă. Хăшхăш йулташсем орканисатсине „*Çамрăксен Комунислă сойус*" тесе йат хуни çамрăксене (пуринҫен ытла хреçҫен çамрăкĕсене) хăратса пăрахĕ тесе шутланă. Хаҫ епĕр вăл йулташсем хăрани вырăнсăрах пулнине куртăмăр. Ку таранҫен çамрăксем пĕр майах Раççейри Комуниссен Парттийĕ хыççăн пыҫĕç; ку таранҫен пĕремĕш сйесĕн постановленисемпе сойусăн йаҫĕ тĕрĕс мар тени пĕр сасă та илтĕнмерĕ. Çавăнпа та епĕр сйес йышăнна постановленисене вырăнлах пулнă тесе шутлатпăр.

Сйесра йышăнна иккĕмĕш пунктăпа Раççейри Çамрăксен Комунислă Сойусăн прокрамĕпе Р. К. П. прокрамĕ пĕринҫен пĕри уйăрăлса тăпи курăнна пек туйăнаҫ. Анҫах вăл апла мар. Прокраммă çинҫе Р. Ç. К. С,

тĕп комитте̧ĕ Р. К. П. тĕп комиттетне пăхăнса тăрат тесе çырнă. Ан̧ах ку икĕ пунктă хушшин̧е нимĕнле уйрăм та çук. Сиес йышăннă иккĕмĕш пунктă тăрăх Р.Ç.К.С. автономиллĕ, вăл орканисатси ĕçне хăй тĕллĕнех ĕçлет, вăл сойуса парттисен̧е тăман çамрăксем кĕреççĕ те, комунисăма вĕренсе пыраççĕ. Сиес çакна ан̧ах пĕлтерешпĕн пулнă. Малалли ĕççен̧е сиес çак теçиссене хăйĕн прокрамĕпе уставĕн̧е лайăх палăртса кăтартса хунă.

**Р. Ç. К. С. иккĕмĕш сиесĕ.**

Раççейри çамрăксен комунислă сойусĕн иккĕмĕш сиесĕ краштăн вăрçи вăхăтĕн̧е пухăннă. Ун ̧ухне Теникин йенерал Тулă хули патнех çитсе пынă, Йутенḝ Питĕр патнелле пынă.

Раççейри çамрăксен комунислă сойусĕн иккĕмĕш сиесĕн̧е ĕçе тума тивĕçлисем 300 телекат пулнă, канашлама тивĕçлисем 55 телекат пынă. Вăл сиес мопилисатсипе çамрăксен малашнехи ĕçĕсем йепле пулмаллине кăтартса панă. Иккĕмĕш сиес хыççăн вара вырăнсен̧е те, Р.Ç.К.С. тĕп комитет çумĕн̧е те мопилисатси ĕçне туса иртерме комиççисем „виççĕнсене“ — тройккăсене суйланă.

Иккĕмĕш сиесра тата çамрăксен ĕçĕ мĕнле хурăмланмалли çин̧ен тавлашнă. Кун пирки 2-мĕш сиес парттире тăман çамрăксен уйрăм ушкăнĕсене тумаллаи, тумалла мари? тесе нумай сӳтсе йавнă. Кун̧енех тата 1918 çултах Тунайевски йулташ ĕçлекенпе хреçен

тепутаҫӗсен канашӗсем пекех, ҫамрӑксен тепутаҫӗсен канашӗсене тумалла тенӗ. Тунайевски йулташ ак ҫапла шутланӑ: ҫамрӑк пролеттарисемпе ваттисем хушшинҫе килӗштерменни пур. Ҫамрӑксене пӑхса тӑракан ҫуккӑ, ҫавӑнпа та вӗсем хӑйсенӗн интересӗсемшӗн хӑйсем тӑрӑшмалла. Ҫамрӑксен сойусӗсем ку ӗҫе тума пултарайманҫӗ, мӗншӗн тесен, вӗсем „сойуссем" анҫах. Унта кӗрекен ҫамрӑксем орканисатсиленес ӗҫе кӑна вӗренеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ҫамрӑксен хӑйсен „ҫамрӑксен канашӗсене" орканисатсилес пулаӗ. Сойусӗсем вӗсен хушшинҫе тӗплӗрех шутласа, орканисатсилекенсем анҫах пулмалла. Хапрӑксавӑтра ӗҫлекен ҫамрӑксем пурӗ пӗрлешсе канашсем тумалла, тенӗ.

Иккӗмӗш сиесре Тунайевски йулташ ун пекех каламан. Вӑл ун ҫух „ҫамрӑксен канашӗсене" тума май килес ҫуккине курса профсойуссем ҫумӗнҫе „ҫамрӑксен ҫексийӗсене" тӑвас пулаӗ, тенӗ. Тунайевски майлӑ пулса сиесра Пелоруҫҫипе Литва ҫамрӑксен комунислӑ сойусӗн тӗп кӑмиттеҫӗнҫе ӗҫлекен Сантер (Зандер) йулташ та ҫексисемшӗн хытӑ тӑнӑ. Вӑл: профсойус ҫумӗнҫи ҫамрӑксен ҫексине Пелоруҫҫипе Литвара гата Раҫҫейре хӑшхӑш ҫӗрте те пур, ҫавӑнпа сиесӑн ҫексисем тумалла тесе постановлени йышӑнас пулаӗ, тенӗ. Анҫах тӗп комиттет кӗпӗрнери комиттет претставиттӗлӗсемпе пӗрле тунӑ пленумра ҫамрӑксен ҫексисене тӑвас темен, йышӑнман. Ҫексисем майлӑ 19 ҫын анҫах пулнӑ. Иккӗмӗш сиесре те Тунайевски йулташ каланине йышӑнас

тесе 19 йулташ кăна ал çĕкленĕ (10 телекат тытăнса тăнă — майлă та, хирĕç те ал çĕклемен), ытти мĕн пур телекат пур те çексисене хирĕç пынă. Иккĕмĕш сйес çамрăксен канашĕсене те, профсойус çумĕнђи çамрăксен çексисене те тумалла мар тенĕ. Вăл сйес „Раççейри Çамрăксен Комунислă сойусĕсĕр" пуçне çамрĕксен урăх нимĕнле орканисатси те пулмалла мар тенĕ. Раç. Ком. Сойусне пур çамрăксем те кĕме пултараççĕ тенĕ. Ку сйес йышĕннă постановлени Раççейри çамрăксен малалла пырас ĕçне тĕплĕ майланса пыма пулăшрĕ.

Сйес тата йалсенђе ĕçлесси çинђен, шкулсем çинђен, тата екномипе тивĕçлĕх (право) ĕçĕсене тăвасси çинђен нумай шутланă. Анђах вăл сйесăн ђăн пысăк ĕçĕ—çамрăксене пĕрлештерсе, мопилисатсилесе, Теникĕ кинпа кĕрешмелле туни пулаĭ.

**Сойусăн ĕçĕсем.** Первейхи сйес хыççăн Раççейри Çамрăксен Комунисла сойусĕ краштăн вăрçи вăхăтĕнђе (1920 ç. çурла уйăхне çитеђђенех) орканисатсиленнĕ. Çавăнпа та вăл вăрçă ун ђухнехи сойусăн ĕçĕсем çинђе палăраĭ.

**Сойус ÿсни.** Раççейри Çамрăксен Комунисла сойусĕн пĕремĕш сйесĕ вăхăтĕнђе (1918 ç. йупа уйăхĕнђе сойусра 22.000 çын пулнă. Иккĕмĕш сйес вăхăтĕнђе (1919 ç. йупа уйăхĕнђе) 96.000 çын пулнă. Виççĕмĕш сйес вăхăтĕнђе (1920 ç., йупа уйăхĕнђе. 400.000 çын ытла пулнă. Куита епĕр Р. Ç. К. С) икĕ çул хушшинђе 18 хут ÿсиине куратпăр. Сойусăн

ўсни вăл акă çакăнтан килет: 1) краштăн вăрçи çамрăксене политтиккă кĕрешӳне кӳртсе пынă. 2) Канаш ирĕкĕ малтанхи кунсенҫех çамрăксен пурăнăçне çăмăллатас йенҫен нумай ĕç тунă (6 сехетлĕ ĕç кунĕ). 3) Реводутси хумĕсем айакри йалсене, вырăнсене персе çитнĕ. 4) 1919 çултан кайран канаш респуплĕкĕ ӳссе пырат, унăн çĕрĕ (территори) аслăланса пырат.

**Р. Ç. К. С. орканисатсисем мĕнле çĕнĕрен пуçланса кайни.**

Р. Ç. К. С. йаҫейккисем орканисатсиленни вăл виçĕ майпа пынă:

1. Вĕсенҫен нумайĕшне пĕремĕш сиесҫен пулнă çамрăксен тĕрлĕ ушкăнĕсем орканисатиленĕ. Вырăнти комиттетсем хăйсен телекаҫĕсене хапрăксавăтсене, йалсене йарса тăнă. Вĕсене акитаттăрсем, тенĕ. Вĕсем хапрăксавăтри комиттетсемпе, йалти канашсемпе пĕрле çамрăксен пухуне пухнă. Унта акитаттăр Раççейри Çамрăксен Комунисла сойусĕн прокрамĕпе уставĕ çинҫен каласа панă хыççăн, Р. Ç. К. Сойусне çырăнăр тенĕ, вара çырăнас текен çамрăксене çавăнтах сойуса çырнă. Çавăн пек пухусенҫе çамрăксем ҫасҫасах пур те çырăннă.

2. Тата Р. Ç. К. С. йаҫейккисене йалсенҫе нумайĕшне фронтран, йе хуларан киле таврăннă çамрăксем, тĕрлĕ салтаксем орканисатсилесе хăварнă. Вăл орканисатсисем ҫасҫасах хăйсем мĕнле майпа мĕн ĕçлемеллине те пĕлмен. Анҫах, пурăннă çемĕн вĕсем хулари, хапрăксавăтри çамрăксен орканисатсисемпе, йе партти комиттеҫĕсемпе çыхăнса, канаш ирĕкĕн йĕркисене

çирĕплетме, вăйлăлатма тытăннă. Раç. Çам. Комунисла Сойусне кирлех мар çамрăксем унтан тухкаласах пынă. Уйес хулисенҫе нумайĕшĕнҫе Р. Ç. К. С. йаҫейккисене Раççейри Комуниссен Партти Комиттеҫĕсем оркаписатсиленĕ.

3. Ҫасҫасах çамрăксен йаҫейккисем тата ак çапла орканисатсиленнĕ: Р. Ç. К. С. йаҫейккине тăвас тесе хăйсем ăссăн пухăннă çамрăксем хăйсем патне акитаттăрсене ҫĕнсе пырса, вĕсемпе пĕрле çамрăксене орканисатсиленĕ.

**Раççейри Çамрăксен Комунисла сойусĕпе сойусра тăман çамрăксем.** Раççейри Çамрăксен Комунисла сойусĕн йаҫейккисем орканисатсиленсен, вĕсен тĕрекĕ сойусра тăман çамрăксем пулнă. Виçтăват уйăхранах хуласенҫе хапрăсавăтри çамрăксен конференсисем, вулăссенҫе хреçҫен çамрăкĕсен конференсисем пулнă. Вăл конференсисем çамрăксене Раççейри Çамрăксен Комунисла сойусне кĕме ҫĕннĕ. Ҫасҫасах конференси телекаҫĕсем пур те Р. Ç. К. С. кĕнĕ. Ун пек конференсисем пулман вырăнсем Канаш респуплĕкĕнҫе йулман теме те йурать.

**Сойус хурăмланни.** Раççейри Çамрăксен Комунисла Сойусĕ ўссе анҫах пыман, вăл Р. Ç. К. С. пĕремĕш сиесĕ хыççăнах парттипе çыхăнса, хурăмланса пынă. Çамрăксен орканисатсийĕсем уйесри, кĕпĕрнери, оплăçри сиессене пухса, комиттетсем суйланă; Раççейри Комуниссен Партти комиттеҫĕсемпе çыхăнса, пĕрле

ĕçleme тытăнна. Ку Çамрăксен сиесĕсенҫен епĕр икĕ сиеса паллă тăватпăр:

1. Пĕри—çурçĕр йенҫи оплăç сиесĕ (1-XII-1919 çулта)

2. Тепри—хĕвеланăç йенҫи оплăç сиесĕ (пушă уйăх 1919 ç.). Ку икĕ оплăç сиесĕсен постановленисене Р. Ç. К. С. пĕрĕмĕш сиесĕ йышăнна постановленисем хушни çеç пулнă.

**Вĕренекен комуниссен сойусĕ.** 1918-мĕш çул пĕтсе пынă ҫух, нумай хуласенҫе вĕренекен комуниссен ушкăнĕсем оркаписатсиленнĕ. Вĕсем „вĕренекен комуниссен сойусĕ" йатлă пулнă. Анҫах вăл сойус 1919 çулăн çуррине çитеҫҫен кăна пурăннă. Вăл вĕренекен комуниссен сойусĕн 1919 çулта ака уйăхĕн 15 кунĕнҫе пĕрĕмĕш сиесĕ пухăннă. Унта 200 телекат пулнă. Вăл вăхăтра çав сойусра 8.000 çын тăнă. Анҫах çак пĕрĕмĕш сиес сойусăн йулашки сиесĕ пулнă. Вăл сиес вĕренекен комуниссен сойусне Раççейри çамрăксен комунисла сойусĕпе пĕрлешмелле тесе постановлени йышăнна. Ку постановлени тăрăх „вĕренекен комуниссен сойусĕ" çу уйĕхĕнҫе Р. Ç. К. С-пе пĕрлешет. Ҫăнах та, револютсилле вĕренекен çамрăксен хăйсен ытти çамрăксенҫен уйăрăлса тăракан ĕççем çук, çавăнпа та вĕсен уйрăм сойуссем, оркаписатсисем тăвасси кирлех мар. Çакă йенҫен çак пĕрлешес тесе йышăнна постановлени питĕ вырăнлă пулнă.

**Акиттатси ĕçĕ.** Ун ҫухнехи çамрăксен хушшинҫи акиттатси лосункĕсем: «канаш ирĕкне сыхласа

тăрас пулаĭ,» тата: «хĕрлĕ çамрăксен Р.Ç.К.С. хушшине кĕрсе пĕрлешес пулаĭ», тенĕ. Акиттатси ĕçне миттинкăсем, пухусем, темонстратсисем, хаçатсем урлă туса пынă. Çамрăксен хушшинҫе Р.Ç.К.С. йаҫейккисем, вĕсен ҫĕрисем револҫутси шухăшĕсемпе çунса тăҫҫăр тесе, нумаĭ акиттатсиленĕ. Ку ĕçре Р. Ç. К. С. акиттатси нумаĭ пулăшу панă. Çамрăксем Р. Ç. К. С. йаҫейккисенĕн сăмахĕсене итлесех пынă. Вĕсем хăйсен сопранисенҫе тĕрлĕ акиттатсипе оркаписатсиленес ĕççене туса пынă. Р. Ç. К. С. вăл вăхăтра тĕрлĕ хронт ернисене, тата нумаĭ ытти политтикkă ĕçĕсене туса пынă (вĕсем 1919-20 ç. ç. пĕр ернере икшер виçшер пулнă). Ку компанисем, ернесем, çамрăксене вĕрентсе, комунисăм шухăшĕсене пĕлтерсе, нумаĭ пулăшу панă.

**Мопилисатси (çара илсе кайас ĕç).** Краштăн вăрçи вăхăтĕнҫе хĕрлĕ çара пулăшма пирĕн Раççейри комунисла сойус хăйĕн ҫленĕсене вăрçа пама пĕтĕм респуплĕкĕпех виçĕ мопилисатси турĕ. Первейхи мопилисатси 1919 çулта ака уйăхĕнҫе иртрĕ. Вăл мопилисатсине хăвелтухăç йенҫи хронта Колҫака хирĕç каĭма тунă. Иккĕмĕшне Р. Ç. К. С. 2-мĕш сйес хыççăн, 1919 çулта, кĕркунне Теникинпа вăрçма иртгернĕ. Виççĕмĕшне Полҫă хронтне йама 1920 çулта иртгернĕ.

Первейхи мопилисатсине иртгернĕ ҫух, Р. Ç. К. С. Т. К. хронт патĕнҫи вырансенҫе оркаписатсисен ҫленĕсене 20% хĕрлĕ çара йамалла тунă. Раççейри Çамрăксен Комунисла Сойусĕн иккĕмĕш сйесĕ мĕн пур оркани-

сатсисен ђленĕсене 30% мопилисатсилемелле тунă. Çак мопилисатсисене ирттернĕ ђух, Р. Ç. К. С. орканисатсийĕсем ђасђасах хăйсен ђленĕсем Т. К. кăтартнинђен 100% ытла хĕрлĕ çара йанă. Хронт патĕнђи орканисатсисем пур те пекех хронта кайнă, Р. Ç. К. С. хĕрлĕ çара тăпмансемпе вăрçма нумай пулăшу панине, епĕр ун ђухнехи «Правда» йатлă хаçат çине çапнă пĕлтерӳсем çинђен лайăх курса тăратпăр. Вăл пĕлтерӳсене епĕр кувта пурне те илсе пĕтерес çук, çавăнпа та паллăраххисене кăна кăтартăпăр: 1) ака уйăхĕн 13. Пенсă хули. Вĕрепекен комуниссен сойусĕ пĕтĕмпе пекех хронта тухса кайаĭ.

2. Ака уйăхĕн 25. Скоппин (Ресаң кĕп.) Сойус пĕтĕмпех хронта тухса кайаĭ.

3. Çу „ 1. Ђаритсăн орканисатси пĕтĕмпех хронта кайаĭ.

4. Ака „ 29. Питĕрти Сойус хăйĕн ђленĕсене 20% (800 çын) мопилисатсилет.

5. Çу „ 7. Ђулхулапа Витепск орканисатсисем 20% хронта йараççĕ.

6. Çу уйăх. 18. Шенкур орканисатсии 50% хронта кайаĭ.

7. Утă „ 19. Курск орканисатсийĕ пур ђленĕсене те вăрçă вырăнĕнђи пурăнăçпа, пурăнмалла тунă (военное положение) 16 çулган пуçласа пур Р. Ç.. К. С. ђленĕсене вăрçă отређĕсене кӳртсе, Партти Комиттеђĕсен аллинђе тăраççĕ.

8. Йупа уйăхĕ. Твер орканисатси 105 ҫын мопилисатсиленĕ.

9. Йупа „ 26. Ресаҥ кĕпкомĕ пĕтĕмпех хронта кайма мопилисатсиленĕ.

10. „ „ 28. Пукаҙов.—30% мопилисатсиленĕ.

11. Ҙӳк уй. 17. Новкорот орканисатси пĕтĕмпех мопилисатсиленĕ.

„ „ „ Веткă 400 ҫын мопилисатсиленĕ

12 „ „ 20. Питĕрте 6 сехет хушшинҙе ирĕкĕн хронта кайма 500 ҫамрăк арҫынсемпе ҫамрăк хĕраҙасем 100-ĕн ҫырăннă.

Кунта кăтартнисем вĕсем хаҫат ҫинҙен тӳрех ҫырса илнисем, кусемсĕр пуҫне тата хăйсен вăйĕсене мопилисатсиленĕ орканисатсисем питĕ нумай. Р.Ҫ.К.С. хăйĕн хушшинҙен хĕрлĕ ҫара панă ҫамрăксене сахалтан та вуншар пинĕн шутламалла. Анҙах Р. Ҫ. К. С. канаш ирĕкне пулăшас ĕҫе кунпах пĕтермен. Ҫу уйăхĕн 21 кунĕнҙе (1919 ҫулта) Р. Ҫ. К. С. тĕп комиттеҙĕ пур Сойус ҙленĕсене те вăрҫă ĕҫне вĕрентмелле тесе, постановлени йышăннă. Анҙах ку вăрҫă ĕҫне вĕренес ĕҫе Т. К. постановлени йышăнаҙҙенех, вырăнсенҙи орканисатсисем ĕҫлеме тытăннă, вĕсем уйрăм ҫамрăк ҫар ушкăнĕсем туса хунă. Кунсăр пуҫҫăр тата Р. Ҫ. К. С. орканисатсисем хăйĕн ҙленĕсене тĕрлĕрен комантир пулмалли курсăсене йарса тăнă. Ку комантир курсăсенҙен кайран нумай ҫамрăксем хĕрлĕ комантире тухнă

Çамрăксен комунисла сойусĕ Украйнăра (вăл кăпитталиссенђен çăлăнсассăн 1919 ç.) хĕрлĕ çар тума питĕ нумай пулăшнă. Кейӳ хулинђи орканисатси, хăйĕн конферентсинђе пантитсене хирĕç мĕн пур конферентсипех вăрçа тухса каймалла тунă. 1919 ç. утă уйăхĕнђе ку Кейӳ çамрăкĕсен отретне Триппођйе патĕнђе Симĕссем (Зеленыйсем) текен пантит ушкăнĕ пĕтĕмпех касса пĕтернĕ. Ку вилнĕ çамрăксен хушшинђе, Украйнăри çамрăксен крушокĕсем вăрттăн ĕçленĕ ђухнехи (çулпа йертсе пыракан) йул. М. Ратмански пулнă. 1920 çулта Вранкĕл çарĕсем Украйналла кĕрсе пынă ђух, Харкăв çамрăкĕсем, вĕсене хирĕç кайма, пронепойес вађђи салтаксене хăйсен хушшинђен панă. Ăна вĕсем «Украйнăри çамрăксен комунисла сойусĕн пронепойесĕ» тесе йат хунă (Бронепоезд—хулăн тимĕр листисемпе витсе тунă ђукун çулпа çӳрекен машшинă). Тата Вранкĕлпе вăрçма Украйнăри сойус 1920 çулта (кĕркунне) икĕ пин çын мопилисатсиленĕ.

Сойус орканисатсиленнĕреннех пур çамрăксене те вăрçă ĕçне вĕревтес тĕлĕшпе (всеобуч) питĕ пикенсе ĕçленĕ. Вăл вăрçă ĕçне вĕренекен çамрăксене политтиккă ĕçне вĕрентме, политруксем (политтиккă руковотитĕлĕсем), политкомсем (политтĕккă комиссарĕсем) кăларнă. Тата сойусăн ђленĕсен пурин те вăрçă ĕçне вĕренмелле пулнă.

**Йалсенђи Р. Ç. К. Сойусĕсем.** Р. Ç. К. С. йалта та питĕ вăйлă ĕçленĕ. Сойусăн $^3/_4$ вăйĕ йал-

та ӗҫлесе тӑнӑ. Анҫах йалсенҫи Р.Ҫ.К.С. йаҫҫейккисем пӑртак хулари йаҫҫейккӑсенҫен урӑхларах ӗҫленӗ. Йалсенҫи Р. Ҫ. К. С. йаҫҫейккисем ҫасҫасах атминистратси ӗҫне туса тӑнӑ. Вӗсем тыр раҫверскисене, тӗрлӗ налуксене пуҫтарма нумай пулӑшу панӑ. Кусемсӗр пуҫне, вӗсем тата канаш ирӗкне ҫирӗплетнӗ, йал-вулӑс канашӗсене суйланӑ; комунӑсем, совхоссем орканисатсиленӗ, пурне те пикенсе ӗҫленӗ. Партти йаҫҫейккисем ҫук вырӑнсенҫе Р.Ҫ.К.С. йаҫҫейккисем вӗсен вырӑнне ӗҫлесе тӑнӑ; партти орканисатсисем пулсан, сойус вӗсене пулӑшу парса тӑнӑ. Вӑл вӑхӑтра (1918—20 ҫ.ҫ.) йалтипе хулари орканисатсисен хушшинҫе ҫыхӑну питӗ вайлӑ пулнӑ. Ку ҫыхӑнува вайлӑлатма хӗрлӗ ҫартан киле таврӑнакан ҫамрӑк салтаксем, хуларан йала „тӑранкалама“ пырса ӗҫлекенсем, хуларан пынӑ „акиттатӑрсем“, унтан ҫамрӑксен (сойусра тӑмапнисен) конференсисем питӗ нумай пулӑшса тӑҫӗҫ. Р. Ҫ. К. С. орканисатсисем йалсенҫе пуринҫеп ытла (атминистратси ӗҫӗпе канашсене орканисатсилес ӗҫе шутламасассӑн, хулари пекех) орканисатсипе акитгатси, тата мопилисатси ӗҫӗсене ӗҫлесе тӑнӑ. Хулари орканисатсисен ӗҫӗ йалтисенҫен економиккӑ тӗлӗшӗнҫен кӑна уйӑрӑлса тӑнӑ.

**Економиккӑ ӗҫӗ (кӗрешӳвӗ).** 1917 ҫултах хӑпрӑксавӑтра ӗҫленекен ҫамрӑксем хӑйсен пурӑнӑҫне лайӑхлатасшӑн економиккӑ кӗрешӳне пуҫлама тытӑнкаланӑ. Ку тӗлӗшпе Питӗрте, Мускав районӗсенҫе, тата Выпорк йенҫе ӗҫлекен ҫамрӑксен стаҫки пулнӑ

Ку стаҫка пуҫӗнҫе „Ӗҫпе Ҫутă“ йатлă Ҫамрăксен районри канашӗ тăнă. 1917 ҫул иӗтсе пывă ҫух, ҫӳк уйăхӗнҫе Питӗр комиттеҫӗ 36 савăтри ӗҫлекен ҫамрăксен претставиттӗлӗсемпе (телекаҫӗсемпе) совешҫави тунă. Вăл совешҫани ҫамраксен ӗҫ кунне ҫакарасси ҫинҫен, ҫамрăксем ӗҫҫӗр тăрса йулни ҫинҫен шутлакаланă. Раштав уйăхӗн пӗтӗмӗшӗнҫе Питӗр комиттеҫӗ Халăха Ҫут та Кăларакан Комиссариата хут ҫырса парать. Ку хут ҫинҫе вăл хапрăксавăт хуҫисен пурлăхӗпе (мулӗпе) ҫамрăксене вӗренмелли шкулсем уҫма ыйтать. Ҫакă шкул хапрăксавăт ҫамрăкӗсем ваҫҫи уҫнă шкулсенҫен ҫăн малтанхи пулнă.

**Економиккă ӗҫӗн хурмисем.** Анҫах економиккă ӗҫне йепле тăвасси, вăл мӗн майпа пулса пырасси, питӗ палăрсах тăман. Ҫакăн пирки хăшхăш йулташсем економиккă ӗҫӗн йӗркине тупас тесе, тӗрлӗ ҫулсем шыра пуҫланă. Вӗсем хăшхăшӗсем кун пирки ҫамрăксен тепуттаҫӗсен канашне, йе профсойуссем ҫумӗнҫе ҫамрăксен ҫексисене тăвас пулать тесе шут тытнă. Кун пек ҫамрăксен „уҫрештенисем“ Мускавра, Мускав хыҫӗнҫи районра, тата Отессă хулинҫе пулнă. Анҫах вӗсем питӗ сахал пурăннă. Ҫак ҫамрăксен уҫрештенисем ҫасах пӗтни, економиккă ӗҫне Раҫҫейри Ҫамрăксен Комунисла Сойусӗ анҫах тума пултарнине лайăх кăтартнă.

Сăмахран каласан, ҫамрăксен канашӗсене, ҫексисене тăвасси вăл економиккă ӗҫӗ мар, вăл ҫамрăксен

кӗрешӳвӗн (малалла пырас ӗҫӗн) хурми анҫах пулаӗ кун пек шухӑшсем економиккӑ ӗҫӗн хурӑмне тупас тенипе кӑна тухса кайнӑ.

**Економиккӑ кӗрешӳвӗ мӗн паҫӗ?**

Сойус економиккӑ тӗлӗшпе нумай ӗҫленӗ, ҫамрӑксене нумай усӑ панӑ: ҫамрӑксен ӗҫ кувӗ 4 сехетпе 6 сӑхете ҫитеҫҫен кӗскелсе йулнӑ; ӗҫ инспектӑрӗсен помошникӗсене Р. Ҫ. К. С. хӑй хушшинҫен суйлама пуҫланӑ; ӗҫлекен ҫамрӑксем ваҫҫи тӗрлӗ шкулсем, клупсем уҫӑлнӑ. Вӗсем кайрантарах хапрӑксавӑт ӗҫне вӗренмелли шкулсем пулнӑ. Питӗрте тата ӗҫлекен ҫамрӑксен 14-18 ҫулхи таран пурне те вӗрентмелле тесе постановлени тунӑ.

**Хапрӑкпа савӑт шкулӗсене тума пуҫлани.**

Пирӗн сойус пурӑна киле кӑна ҫӑмрӑксен ӗҫӗ ҫине тӗрӗс куҫпа пӑхма пуҫланӑ. Пирӗн Р. Ҫ. К. С. Т. К-ҫӗ ҫамрӑксен ӗҫӗ ҫине мӗнле пӑхса тӑнине пӗлес тесен, епӗр вӑл 1919 ҫ. нарӑс уйӑхӗн 13 кунӗнҫе йышӑннӑ постановленине пӑхӑпӑр. Анҫах кӑва калиҫҫен, йупа уйӑхӗнҫи револютси хыҫҫӑн икӗ кунтанах Халӑх Комиссарӗсен Канашӗ ӗҫ ҫинҫен кӑларнӑ текрета (саккуна) пӗлсе тӑрас пулаӗ. Вӑл текрет ҫинҫе ӗҫ кунне 8 сехетлӗ тӑвас пулаӗ тесе ҫи малтан каланӑ. Ку текрет ҫинҫех тата 20 ҫула ҫитмен ҫамрӑксене пурне те 1920 ҫ. кӑрлаҫ уйӑхӗн пӗрӗмӗш кунҫҫен ӗҫрен кӑлармалли ҫинҫен каланӑ. Ку постановленине йышӑннӑ ҫух, Халӑх Комиссарӗсен Канашӗ ҫав ҫамрӑксене пурне те техниккӑпа профеҫҫи шкулӗсене йарас тесе шутланӑ. Ку текре-

та кăларнă тĕлĕшпе, Р. Ç. К. С. Т. К-ђĕ йышăннă ресолђутсинђе çапла калаҭ:

Р. Ç. К. С. Т. К ђĕ çамрăксен ĕçĕпе вĕсене сотсиалисăм ĕçне вĕрентесси çинђеп шутласа пăхрĕ те, çамрăксене вĕрентес ĕçе происвотствă ĕçĕпе çыхăнтармалла тет; ăна (происвотствă) ĕçне сотсиалисăма вĕрентме майлă туса урăхлатас пулаҭ, тет. Çак ĕçе тăвас тĕлĕшпе Т. К-т çакăн пек тума шутлаҭ:

1. Халăх Комиссарĕсен Канашĕ кăларнă текрет тăрăх, 14 çула çитмен çамрăксене кăрлађăн пĕрĕмĕш кунĕнђен (1920 ç.) кайран ĕçлеттермелле мар; 14 çултан пуçласа 20 çула çитнисене ĕçлетермелле, çавăнпа Халăх Комиссарĕсен Канашĕ кăларнă текрет ку тĕлĕшпе каланине пăрахмалла;

2. 14-па 18 çул хушшинђи çамрăксен ĕçне сыхлас майпа, вĕсене кунне 4 сехетрен ытла ĕçлеттермелле мар;

3. Малашне çамрăксем вађђи тăвас шкулсене ку таранђен хапрăксавăт шкулĕсем майлă тăвас пулаҭ, мĕншĕн тесен, иккĕмĕш сыпăклă шкулсенĕн прокрамĕ те, вĕренекен çамрăкĕсем те вĕсене килĕшмеççĕ.

4. Ним вăхăт иртермесĕрех, çамрăксене ĕçленипе сотсиалисăма вĕренсе пымалла тăвас пулаҭ; çамрăксене пур ĕçре те кунне 4 сехетрен ытла ĕçлеттермелле мар тесе саккун кăлармалла, тет.

Кунсăр пуçне тата т. к-т сутуилўпе промышлĕнăçра ĕçлекен, тата патшалăх уђрештенисенђе ĕçлекен çамрăксем ĕçлесе вĕренесси çинђен шутламалла тенĕ.

Кун хыççăнах Шатскин йул. шкул политтикĕ çинђен кăтартса çырнă теçисĕсене çапнă. Çакăн пирки сойусăн халăха çутта кăларакан комиссарйађĕпе нумай тавлашмалла пулнă. Ку тавлашу 1920 çула çитеђђенех ђăсăлса пынă, çапах та ку тавлашура Р. Ç. К. С. çийеле тухнă.

Сойусăн екокомикка ĕçĕ 1920 çул çурта питĕ вăйланса çитнĕ. Ку вăхăтра Р. Ç. К. С. профеççи сойусĕсене те, тĕрлĕ патшалăх уђрештенисене те хăйĕн претставиттĕлĕсене йара пуçларĕ. Пур халăх комисарйађĕсем çамрăксен ĕçне çăмăллатас тĕлĕшпе тăрăша пуçларĕç, çакăнпа та ку вăхăтра сойусăн екокомикка ĕçне туса пыма питĕ майлă, çăмăл пулнă. Ăна патшалăх пур çамрăксене те ђирлĕ, ђирлĕ маррине пăхма, хăрушă вырăнта ĕçлекен çамрăксене çăмăлтарах ĕçе куçарма пуçланă, çамрăксене тытса çпекуђатси тунисене пĕтерме ирĕк парса пынă. Кун пирки, пирĕн сойус питĕ пысăк ĕç турĕ. Хăшхăш йулташсем, çамрăксене пурне те ђасрах вĕреннĕ çынсем тăвас тесе, кулăшла канаш панă. Çаккăн пек Салкинт йулт. 15 çултан пуçласа пур çамрăксене те хапрăксавăтсенђе происвотствă ĕçне вĕрентме мопилисатсилемелле тесе «Правда» хаçата çырнă (1920 ç. нарсăн 5 кунĕ).

**Çамрăксен комунисла сойусĕсем вăрттăн ĕçлени.** Çамрăксен комунисла сойусĕсем краштăн вăрçи вăхăтĕнђе йеппе ĕçленине тĕпĕйĕрĕпех пĕлсе тăрас тесен, пирĕн çамрăксен сойусĕсем шурăçарсем тытса илнĕ вырĕнсенђе

мĕнле ĕçленине пăхса тухас пулаť. Кун пек шурă çар пĕр вăхăтлăха туртса илнĕ вырăнсем акă çаксем: Украйнă, Капкас, Урал, тата Çĕпĕр. Ку вырăнсенҫе çамрăксен орканисатсисем вăрттăн кăна ĕçленĕ.

Украйнă. Украйнă нумайҫҫен шуррисен аллинҫе тăнă. Çапах та унта çамрăксен комунисла сойусĕсем питĕ вăйлăн ĕçленĕ. Украйнăри çамрăксен комунисла сойусĕсен сиесĕ (утă уйăхĕ 26 кун. 1919 ç.) уçăлнă ҫух Харккăв хулине тытса илнĕ пулнă, çавăнпа та Тнепр шывĕн сулахай йенҫи орканисатсисем сиеса пыма пултарайман. Шурă çарсем Украйнăлла кĕрсе пынă пирки, ку сиес пуринҫен ытла респуплĕккăна сыхласа тăрасси çинҫен шутланă. Сиес телекаҫĕсене пурне те мопилисатсиленĕ. Каçсерен вĕсем пăшалсемпе çӳресе тĕрлĕ канаш тăшманĕсене тыта тыта хупнă, оплавăсем тунă.

Теникскĕн çарĕсем Украйнăлла кĕрсех пынă. Çурла уйăхĕнҫе Украйнăна пĕтĕмпех шуррисем тытса илнĕ. Револҫутсионерсене питĕ хĕсĕрленĕ (террорланă) пирки, çамрăксен кĕрешӳвĕ ҫарăнса ларнă. Ҫи вăйлă, маларах пуçланивă, орканисатсисем кăна тăрса йулнă. Нумай, орканисатсисене çĕмĕрсе пĕтернĕ. Çак йулнă орканисатсисенҫен Отессă орканисатси питĕ пикенсе вăйлă ĕçленĕ. Ку орканисатсинҫе 10 происвотствă йаҫейккисем тăрса йулнă, унта ҫлен пурĕ 300 йахăн пулнă. Ку орканисатси вăрттăн тухса тăракан („комунис" йатлă) шурналта çамрăксен странитси кăларса тăнă; унăн хăйĕн

вӑрҫӑ отреҭӗ пулнӑ (ку отрет влаҫа каӑйалла туртса илме нумай пулӑшнӑ); вӑл вӑрттӑн ӗҫленӗ ҭух, ҫамрӑксем 3 конференси тунӑ (кашнине 30-40 телекат пынӑ). Шуррисем Украйнӑран тарас умӗн ку орканисатси питӗ ҫирӗпленсе, вӑйлӑланса ҫитнӗ; вӑл ҫамрӑксен кӗпӗрне сйесне пухма тытӑннӑ.

Шуррисем пырсан нумай орканисатсисене ҫӗмӗрнӗ. Кусен хушшинҭе Николайев орканисатси те пулнӑ. Унӑн комиттеҭӗне пӗтӗмпех тытса хупнӑ. Тата Слащҭев кенерал персе, вӗлернӗ 63 ҫын шутӗнҭе сойус ҭленӗсем те пулнӑ. Хӗрлӗ ҫар Украйнӑран шуррисене хӑваласа кӑларас умӗн, Херсонра Ҫамрӑксен Комунисла Сойусӗ ҫӗнӗрен орканисатсиленнӗ. Лайӑх ӗҫлекен орканисатсисем хушшинҭе Кременҭук орканисатси пулнӑ. (Ку орканисатсинҭе тӑракан, тапак хапрӑкӗнҭе ӗҫлекен 6 ҫамрӑк хӗрсене шуррисем персе вӗлернӗ). Тата шуррисемпе Йекаттеринославри орканисатси вӑйлӑ кӗрешнӗ.

Капкас. Капкасра ҭи вӑйлӑ ӗҫлекен орканисатси Паккура пулнӑ. Вӑл орканисатсинҭе пуринҭен ытла типокрафинҭе ӗҫлекен ҫамрӑксен йаҭейккисем палӑрнӑ. Кусемсӗр пуҫне тата вӑрттӑн ӗҫлекен орканисатсисем Тифлисре (Круҫире) пулнӑ.

Уралпа Ҫӗпӗрте вӑрттӑн ӗҫлекен ҫамрӑксен орканисатсийӗсем пулман. Анҭах ҫапах та ҫамрӑксем вӑрттӑн ӗҫлекен партти орканисатсисене нумай пулӑшса тӑнӑ. Вӗсем (ҫамрӑксем) партти хушнӑ ӗҫҫене туса

тăнă, тата хĕрлĕ çарăн пĕҫĕкрех ушкăнĕсене, парттисан отреҫĕсене кĕнĕ; тăшман ăçтине пĕлсе çÿренĕ.

Краштăн вăрçи вăхăҫĕ, тата вăрттăн ĕçлени, çамрăксене куҍтурăпа политтĕккĕ тĕлĕшĕнҫен вĕрентсе, вĕсене пĕлекентерех çынсем турĕ. Ку кĕрешÿ вĕсене револютси вăхăтĕнҫе çамрăксем ăçта пулмаллине, мĕн тумаллине, кам хыççăн каймаллине кăтартса паҫĕ. Ку йенҫен краштăн вăрçи çамрăксемшĕн револютси шкулĕ пулҫĕ. Ку шкултан вĕренсе тухсан, çамрăксем йăвăртарах ĕçе, тĕрлĕ науккăсене—вĕренме тытăнҫĕç. Кунтан шутласан, краштăн вăрçипе вăрттăн ĕçлени çамрăксене пурăнма вĕрентрĕ. Çапах та тепĕр йенҫен ку вăхăт нумай сийен те турĕ. Ку сийенсем акă çаксем: 1) Сойус питĕ ÿссе пынă пирки, лайăхрах ĕçлеме пĕлекен йулташсем (активиссем) мĕн пур сойуса кĕрекен çăмрăксене вĕрентсе пыма пултарайман, мĕншĕн тесен, вĕсем сахаллăн пулнă.

2) Краштăн вăрçи çамрăксенҫен тĕплĕ орканисаттăрсем, комуниссем тума кансĕрленĕ, атминистратси ĕçне туса пыма кăна вĕрентнĕ.

3) Çамрăксем вăл ҫăхăтра науккăна вĕренес ĕçе тума пултараймаи, çавăнпа та вĕсем çийелтен пĕлекен çынсем кăна пулнă,

Çакă кăтартнă инкексем, сийенсем 1920 çул пĕтмĕшĕнҫе питĕ палăрса çитрĕç, тепĕр тĕрлĕ каласан, пирĕн сойус ҫирле пуçларĕ.

## Краштӑн ҫапӑҫувӗ пӗтсен, пурӑнӑҫ лӑпланни. Ҫӗнӗ екномикӑ политтӗккӗ тата, Р.Ҫ К.С.

**Сойусӑн йӑвӑр вӑхӑҭӗ** 1920 ҫул пӗтнӗ ҫӗре пирӗн республӗккӑра краштӑн вӑрҫи пӗтрӗ, вӑрҫӑ хронҭӗсем йулмарӗҫ. Ҫавӑнпа хамӑр хуҫайствӑна йусас вӑхӑт ҫитрӗ. Анҭах вӑрҫӑ ӗҫне пӑрахса, хуҫайствӑ ӗҫне тытӑннӑ ҭух, пирӗн сойус имшерленсе вӑйсӑрлана пуҫларӗ. Сойусӑн ҫак йӑвӑр вӑхӑҭӗ—криҫӗс пӗр ҫулталӑк ҫурҭенех ҭӑсӑлса пыҭӗ (1922 ҫ.). Сӑмахран каласан, ҫакӑн пек криҫӗс сойусӑн кӑна пулман, вӑл криҫӗс профсойуссен те, партти орканисатсисен те пулнӑ, тепӗр тӗрлӗ каласан, вӑл пӗтӗм политтӗкӗ криҫисӗ пулнӑ.

Вӑрҫӑ ҭарӑнсанах пирӗн сойус сахалланма пуҫларӗ. Тонпасри (Тон оплӑҫӗнҭи ҫӗр кӑмрӑк кӑларакан вырӑнти) орканисатси ҫурри кӑна тӑрса йулнӑ. Ку криҫӗс акӑ ҫакӑнтан килнӗ: 1) ҫамрӑксем, вӑрҫӑ ӗҫӗ пӗтсенех, тӗрлӗ науккӑсене лайӑхрах, тӗплӗрех вӗренме тытӑннӑ. Акиттатси ӗҫӗ лайӑхланнӑ.

2) Сойусра лайӑх ӗҫлеме пӗлекен йулташсем (активиссем) сахал пулнӑ, ҫавӑнпа та вӗсем 400.000 ҫамрӑка вӗрентсе тӑма пултарайман.

Тепӗр йенҭен, ҭӑн тимлӗ ҫамрӑксем, активиссем, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнҭе ӗҫленӗ майпа кӑна ӗҫлеме пултарнӑ. Акиттатси ҫамрӑксене пурне те йӑлӑхтарнӑ пирки, пропакантӑ ӗҫне тумалла пулнӑ, анҭах ку ӗҫе туса пыма сойусӑн вӑйӗ ҫитмен. Ҫакӑн пирки вырӑнсенҭи йаҭҭейк-

кăсен ĕçĕ ҫарăнса ларнă. Активиссем ытти сойусăн çамрăксенҫен уйăрăлса кайа пуçланă. Тата йулашкинҫен ку криçĕса Т. К-тăн тавлашусем пушшех импере кăлара пуçланă (Тунайевски пăтранăвĕ).

Ку криçĕсрен мĕнле майпа хăтăлмаллине Раçç. Çам. Ком. Сойусĕн виççĕмĕш сйесĕ кăтартса памалла пулнă.

**Виççĕмĕш сйес.** Р.Ç.К.С. виççĕмĕш сйесĕ 1920 çулта йупа уйăхĕнҫе пухăннă. Виççĕмĕш сйес малалла мĕнле çулпа пымаллине, мĕн ĕçлемеллине кăтартса паҫĕ. Вăл акиттатсине пăрахса, пропакантă ĕçне тытăнмалла, сойусăн ҫленĕсене политтĕккă ĕçне вĕрентмелле, тенĕ. Ку ĕçе тăвас майпа активиссен ушкăнне вăйлăлатмалла тенĕ. Çамрăксене сотсиалисăма вĕрентмелле, çавăнпа вĕсем ваҍҍи хапрăксавăтсенҫе шкулсем уçмалла тенĕ. Ку çамрăксене вĕрентес ĕçе тытса туса тăма, респуплĕкре хăйне уйрăм пĕр уҫрештени тума кирлĕ тенĕ. Виççĕмĕш сйес тата ытти ĕççене мĕнле майпа туса пымаллине те кăтартса панă. Ку сйесре Леҍăн йулташ çамрăксен сойусĕсен мĕн ĕççем тумаллине лайăх кăтартса панă. Леҍăн калани хаҍ те вырăнлă.

**Сойусри пăрăнҍăксем.** Виççĕмĕш сйесре иккĕмĕш сйесри пекех, çамрăксен кĕрешӳвĕ мĕнле пулса пырасси çинҫеп питĕ нумай тавлашнă. Йулташ Карпĕр (Гарбер)—Хусан телекаҫĕ—Сойуса урăхлатмалла, ăна Çамрăксен Комунисла Сойусĕ мар, Комунислă Çамрăксен Сойусĕ тумалла тенĕ. Ку сăмахсене тĕрĕсрех каласан, Р.Ç.К. сойусне Çамрăк Комуниссен Партти тумалла тени пу-

лаť. Виççӗмӗш сйес Карпӗр йул. шухăшӗсене йышăнман. Ку тӗлӗшпе сйес Р. Ç. К. С. çамрăксен парттийӗ мар, пур çамрăксене пӗрлештерсе комунисăм çинҙен вӗрентекен сойусӗ кăна пулмалла тенӗ.

Тата сйесре Украйнăран килнӗ йулташсем тавлашкалапă. Вӗсем хапрăксавăтсенҙе сойуса кӗмен çамрăксен ушкăнӗсене (коллективӗсене) тăвас пулаť, тенӗ. Кун пирки виççӗмӗш сйес уйрăм ресоҙутси йышăннă. Ку ресоҙутси акă çапла калаť: сйес сойусра тăман çамрăксен ушкăнӗсене (коллективӗсене) тăвас йӗркене йышăнмасť; хапрăксавăтсенҙи çамрăксенӗн тӗп орканисатси Раççейри Çам. Ком. сойусӗн йаҙейккисем, тата ӗçлекен çамрăксен телекаҙӗсен пухăвӗсем пулмалла, Р. Ç. К. сойусӗпе сойусра тăман çамрăксен хушшинҙе çыхăну тытса тăма „çамрăксен конференсисене“ пухмалла тенӗ.

Виççӗмӗш сйес тата сойусăн çӗнӗ прокрамӗне йышăннă. Кайрантарах ку прокрама Р.Ç.К.С. тăваттăмӗш сйесӗ нумай урăхлатрӗ.

Виççӗмӗш сйесҙен пирӗн сойус пӗтӗм респуплӗк ӗçне нумай тунă: ӗç кунне 4 сехетпе 6 сехет туни, т. ыт. 1920 çул пӗтнӗ çӗре респуплӗк орканисатсисем, уҙрешнисем çирӗпленсе çитнӗ. Çавăнпа та сойус вăл ӗççене туни халӗ пигех кирлӗ пулман. Çапах та сйесре хăшхăш йулташсем ку ӗççене малашне те тусах пымалла тенӗ. Кун пирки нумай тавлашу пулнă. Çавăнпа сйес сойуспа респуплӗк оркăнӗсем ӗçне уйăрса татса паҙӗ.

Сиес каларĕ: сойус респуплĕк оркăнĕсен ĕçне тумасӑ, вĕçене вăйĕ çитнĕ таран пикенсе пулăшса кăпа тăраӑ. Профсойуссемпе сойус ĕçне те çакăн йевĕрлех уйăрса, татса панă.

Виççĕмĕш сиеспе тăваттăмĕш сейес хушши.

Виççĕмĕш сиес иртсен, сойус вăйлăн пикенсе ĕçе тытăнвă, анӡах ку ĕç екконимиккăн çĕнĕ политтĕккĕне йышăннă пирки ӡаранса лармалла пулнă.

Малтанхи вăхăтра оркаписатсисем хăйсен ӡленĕсем хушшинӡе политтĕкă пĕлменнисене вĕрентме тытăннă. 1921 çулта нарăсăн 5 кунĕнӡе сойусра политтĕкă тĕлĕшĕпе çутта кăларас ĕç канашлăхĕ пулнă. Ку канашлăхра çамрăксене çутта кăларасси çинӡен, происвотствă пропаканти çинӡен, клупсенӡе ĕçлесси çинӡен, хаçаткĕнеке кăларасси çинӡен, çамрăксен хушшинӡе ĕçлекенсене хатĕрлесси çинӡен нумай шутланă, тĕрлĕ постановленисем йышăннă.

Нарăсăн 15 кунĕнӡе пĕтĕм респуплĕкĕпех Р.Ç.К.С. ӡленĕсен рекистратсийĕ пуçланнă. Сойус çурри сахалланса йулнă. (3 сиес умĕн 400.000 ӡлен пулнă—1920 çулăн варĕнӡе 200.000 кăна йулнă) Сойусран пуринӡен ытла уӡрештенисенӡе ĕçлекенсемпе хреçӡен çамрăкĕсем тухнă. Ака уйĕхĕнӡе сойуса вăйлăлатас тĕлĕшпе хапрăксавăт йаӡейккисене вăйлăлатмалли ерне иртернĕ. Çапла çуллахи ĕç хушшинӡе мĕнле майпа ĕçлемелли çинӡен камппани иртернĕ. Тата çамрăксене тĕрлĕ майпа политтĕккă пурăнăçне кӳртме тăрăшнă.

Виççĕмĕш сиес сойуса тĕреклĕлентерес тесе вăхăтлăха хăйĕн хулинче кăна ĕçлемелле тенĕ. Мĕншĕн тесен, ку вăхăтра сойусăн сойусра тăман çамрăксемпе çыхăну пулманпа пĕрех пулнă. Ку инкек Кронштат пăлхавĕ вăхăтĕнче палăрнă. Çĕртмепе утă уйăхĕнче (1921 ç.) хапрăкçавăтсенче ĕçлекенсене сахаллатнă пирки, нумайĕшĕ вĕсенчен ĕççĕр тăрса йулнă. Ĕç хакĕ ӳкнĕ; ĕç кунĕ улшăнса пыма пуçланă: нумай çамрăксем ĕççĕр тăрса йулнă. Кун пирки, сойусра тăман çамрăксем сойуса йуратма пăрахнă, ăна шанми пулнă. Çапла сойуспа çамрăк хушшинче çыхăву пĕте пуçланă. Çĕнĕ екокомиккă политтĕккине йышăнни те сойуса çамрăксен хушшинче ĕçлеме кансĕрлесе тăнă. Екконамиккăн çĕнĕ политтĕкĕ пĕр йенчен нумай усăллă пулсан та, тепĕр йенчен нумай инкек кăтартаť. Ку инкексем сойусăн ĕçне туса пыма нумай кансĕрленĕ. Тата сойусра тăракан çамрăксем нумайĕшĕ Е. Ç. П-не мĕншĕн йышăннине, вăл мĕн йенчен кирлине те пĕлсе тăман. Ку вăхăтра (1921 ç. иккĕмĕш пайĕнчен шутласа) сойусăн лосункисем: çамрăксене происвотствăра хăварас тĕлĕшпе кĕрешмелле, сойусра тăман çамрăксемпе çыхăну вăйлăлатмалла, çамрăксене екокомиккăн çĕнĕ политтĕкĕ çинчен тăнлантармалла, унăн инкекĕсемпе кĕрешмелле, тенĕ.

Анчах Раççейри Çамрăксен Комунисла Сойусĕ тăваттăмĕш сиесĕнчен ку лосункăсене ĕçе кӳртес тĕлешпе пит сахал ĕçленĕ. Мĕн пурĕ те пĕр Е.Ç.П. çинчен çамрăксене тăнлантармалли кампани кăна ир-

тернӗ. Ку Е.Ç.П. хуллен вӑйлӑланса пынӑ майӗпе сойусăн пӗр майах çӗнӗрен çӗнӗ ӗççем тупӑнса пынинҫен килет. Кунта тата Ӗçпе Вӑрçӑ Канашӗ (С. Т. О) йышӑннӑ постановлени çинҫен калас пулат̆, вӑл штатсене йепле пӗҫӗклетмеллине кӑтартса панӑ. Кусемсӗр пуçне, ку вӑхӑтр хапрӑксавӑт шкулӗн ӗçӗ питӗ вӑйлӑланса сарӑлса кайат̆.

Çак вӑхӑтрах професçи тӗлӗшӗпе çутта кӑларакан тӗп комиттеҫӗ çумӗнҫе, ӗçлекен аҫапӑҫа шкулӗсен уйрӑмӗ уçӑлат̆. Хапрӑксавӑтра ӗçлекен çамрӑксен шкулӗсем нумайӗшӗ çак вӑхӑтра уçӑлнӑ.

**Тӑваттăмӗш сйес.** Расçейри çамрӑксен комунисла сойусӗн тӑваттӑмӗш сйесӗнҫе 615 телеката йахӑн пухӑннӑ. Вӗсенҫен 415 ӗç тӑвакан саспа, 200 йахӑн канашлакан саспа пулнӑ. Сйесӗн тӗп ӗçӗсем акӑ çаксем пулнӑ: ӗçлекен çамрӑксен пурӑнӑçӗпе ӑна лайӑхлатасси, тата çӗнӗ економиккӑ политтӗккӗпе йышӑннӑранпа пуçланса кайнӑ сатаҫҫӑсем.

Ӗçлекен çамрӑксен пурӑнӑçне лайӑхлатас тӗлӗшпе, сйес çак ӗççене тума кӑтартнӑ: 1) ӗçлекен çамрӑксене хапрӑксавӑтран кӑларас ӗçе (сокращҫенине) майласа пымалла; 2) шкулсене нумайлатмалла; 3) çамрӑксен ӗç хакне (тарифне) лайӑх кӑтартса памалла тенӗ.

Ку 4-мӗш сйесре пуринҫен ытла çӗнӗ курс тухнӑ пирки ӗçлемелли çӗнӗ çул тупасси çинҫен палӑрнӑ. Елӗк кун пек ӗç туса курман пирки, сйесӗн ку ӗçе питӗ сыхланса хуллен тумалла пулнӑ. Хаҫхи вӑхӑтра

сойусӑн мӗскер ӗҫлемелли ҫинҫен йышӑннӑ ресолуци акӑ ҫапла калать: „Ӗҫлекен ҫамрӑксем хапрӑксавӑтра ытти ӗҫлекенсем пек ӗҫпе сахал ҫыхӑнса тӑман пирки, вӗтӗ пуршуаҫи йе пӑхӑнса, урӑх клас йенне ҫавӑрӑнса кайма пултараҫҫӗ, тенӗ. Ҫавӑнпа та ӗҫе малалла йарас тесен, пуринҫен ытла ҫамрӑксен вӗренмелле. Ку ӗҫе туса тӑма (сойусӑн аппаратӗсене те) комитетӗсемпе, комиҫҫисене, метгогне те йусамалла, тенӗ. Сиесӗн ытти постановленисем (хапрӑксавӑт йачейккисем йенне ҫул тытасси ҫинҫен, йалта ӗҫлесси ҫинҫен, активиссем ҫинҫен т. ыт. пур те) ҫак кӑтартнӑ тӗп ӗҫе вакласа кӑтартса пани кӑна пулнӑ.

4-мӗш сиес тата сойусӑн прокрамӗне урӑхлатса йусанӑ, унтан сойусӑн уставне йышӑннӑ

Сиесре тӗп тавлашуллӑ ӗҫҫем виҫҫӗ пулнӑ: сойусӑн политтӗккӑ ӗҫӗ, сойуса миҫе ҫулти ҫамрӑксене кӳртесси, тата сойуса тасатасси.

1) Сойусӑн политтӗккӑ ӗҫӗ мӗнле пуласси ҫинҫен Сиесре тавлашу Украйнӑ оппоҫитсинҫе тӑракан йулташсем, пуҫласа йанӑ. Вӗсен шучӗпе сойус партти ӗҫне те, тавлашуллӑ патшалӑх ӗҫӗсене те парттипе пӗрле тумалла, тенӗ. Анҫах ку шухӑшсене 4-мӗш сиес йышӑнман. Сиес пирӗн сойус ҫамрӑкӗсене комунисӑмла вӗрентсе ӳстерекен орканисатси кӑна пулмалла, тенӗ. Сойусӑн парттине пӑхӑнса тӑмалла, тата хӑйӗн членӗсене унӑн комумисӑма вӗрентме пултаракан партти ӗҫне анҫах кӳртес пулать тенӗ. Партти сиесӗсем умӗн пулакан тавлашусем

(тискуççисем) вĕрентме пулăшмаççĕ, çавăнпа та сойусăн ку тавлашусенҫе хугшăнса тăни вăл усă кӳмест. Сойус партти ушкăнĕ мар, вăл партти оркансатсисемпе йаҫейккисем пек партти шугĕнҫе тăмасть, вăл çамрăксене парттине кĕме хатĕрлекен шкул кăна тенĕ.

2. Иккĕмĕш тавлашуллă ĕç сйесре çамрăксене сойуса 16 çултан пуçласа кăна илмелле тенĕ шухăш пулнă. Урăхла каласан, вăл 14-па 16 çул хушшинҫи çамрăксене сойусран кăлармалла, çĕнĕрен ун пеккисене кӳртмелле мар тени пулать. Анҫах происвогствăра вăл çулхи çамрăксем питĕ нумай, çавăнпа та сйес вăл шухăша йышăнман.

3. Сойусран вак пуршуаçи аҫипăҫисене кăлара калара тасатассине те сйес йышăнман, мĕншĕн тесен, уйрăм çамрăксене кăларса йанипех ку ĕç пулмасть. Çавăнпа та çакă сийене пĕтерес тĕлĕшпе, сйес хапрăксавăтсенҫи йаҫейккăсене вăйлăлатмалла тенĕ.

**Çамрăксен пурăнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе кĕрешни.**

Тăваттăмĕш сйес иртсен, сойус çамрăксен пурăнăçне лайăхлатасшăн тăрăшма пуçларĕ. Вăл хапрăксавăтсенҫе, тĕрлĕ претприйаттисенҫе ĕçлекен çамрăксене происвотствăра хăварас тĕлĕшпе питĕ нумай кĕрешрĕ. Ăна ĕçлеме питĕ йăвăр пулнă. Происвотствăра ĕçлекенсене сахаллатсах пынă. Раççейри Комуниссен Парттин Тĕп Комиттеҫĕ профсойуссене урăх çул çине куçмалла, урăхла ĕçлемелле тесе кăларнă тесиссем пирки, ĕçлеме йăвăрланнă çемĕн йăвăрланнă. Профсойуса кĕрекене ирĕккĕн кĕмелле ту-

нă. Хапрăксавăтсенҫе килешӳ хуҫĕ тутарса ĕҫлеме пуҫланă. Сойус йанă ҫынсене тата ĕҫ инспектăрĕсенĕн ассистенҫĕсене (пулăшаканĕсене) профсойуссенҫе сахалата пуҫланă.

**Сойус ҫĕнĕ курса тытни.** Сойус ҫĕнĕ курса хуллен йышăнса пынă, ҫĕнĕ курс вăл питĕ майĕпе ĕҫе кĕрсе пынă. Малалла тухса тăракан ҫăн пысăк ĕҫ ҫамрăксене ҫутта кăларас ĕҫĕн меттоҫĕ (ĕҫ майĕ) пулнă. Вырăнсенҫе ҫĕнĕ метотсене хытă шыранă, ташăсем ҫинҫен тавлашнă, хăшхăш ҫĕрте тата вăййăсем, савăнăҫсем тума пуҫланă.

Ҫĕнĕ ҫулсене тупса хурăмлатни, сойусăн пурăнăҫ йĕрки ҫавăрăнса кайни, 4-мĕш сйес хыҫҫăнах пулман, вăл 4-мĕшпе 5-мĕш сйес хушшинҫе пулса пынă, вара Раҫҫейри Комунис Парттин 11-мĕш сйесĕпе сойусăн конференсинҫе пулса ҫитнĕ.

**Украйнăри оппоҫитси.** Вăрҫă хыҫҫăн йĕркеллĕ пурăнăҫ пуҫланса кайнă вăхăтра сойус арканса кайнине Украйнăри тавлашусем (тискуҫҫисем) лайăх кăтартса тăраҫҫĕ. Ку тавлашусем вăйлăланса сарăлса кайса, пур ҫамрăксен орканисатсисене те пăлхатнă. Анҫах ку тавлашусем Украйнăра кăна пулнă, урăх ҫĕрти орканисатсисене пырса перĕнеймен *). Украйнăри оппоҫитсисенҫе тăракан йулташсем ҫакăн пек шухăшланă: 1) сойусра тăман ҫамрăксен ушкăнĕсене (коллективĕсене) тумалла, 2) интеликентсене сойуса илме пăрахмалла, 3) сойус комиттеҫĕсене происвотствăра

*) Куҫаракан шуҫĕпе ку сăмахсем питĕ ҫăнах мар. Г. Т.

ĕçлекен самрăксене кăна кӳртмелле, тенĕ. Ку шухăшсем тур те çамрăксен коллективĕсемпе сойус тавра çавăрăнса тăраççĕ.

Пирĕн Раççейри Çамрăксен Комунисла сойусĕ пур çамрăксене хăй хушшине кӳртсе пĕрлештерсе тăрать, çавăнпа та урăх çамрăк ушкăнĕсене туни нимĕн усă та памасть.

Вĕренекен çамрăксене сойуса сыхланарах илмелле, анҫах пĕр илсен, вĕсем ытти сойус ҫленĕсемпе пĕрех пулса тăмалла.

Украйнăри çамрăксен комунисла сойусĕсен виççĕмĕш сиесĕнҫе ку тавлашу пĕтнĕ, сойусри фраксисене (уйрăм ушкăнсене) пĕтернĕ. Тавлашу хыççăн Украйнă орканисатси вăйлăланса çирĕпленсе çитнĕ. Çапла вăл Р.Ç.К.С ҫи малта пыракан орканисатси пулса тăнă.

IV.

## Р. Ç. К. С. сойусĕпе çамрăксен Комунисла Интернатсионалĕ.

Р. К. П. 11-мĕш сиесĕ.

«Р. Ç. К. сойусĕнҫе ĕçлени профсойусра, хĕрлĕ çарта ĕçлени пекех питĕ кирлĕ». «Хаҫхи вăхăтра ĕçлекенсемпе хресҫен çамрăкĕсене пăхса ӳстерессинҫен пахарах ĕç урăх çук» (Тротски.)

«Çамрăксен хушшинҫе тăвас ĕç çине пирĕн ку таранҫенхинҫен ытларах пăхмалла, ку вăйă мар, питĕ пысăк ĕç, çавна пирĕн пĕлсе тăмалла» (К. Çиновйев.

—Р. К. П. 11-мĕш сĭесĕ çамрăксен çинҫен йышăннă ресолҫутси).

Парттире ĕçлекен паллă çынсем çакăн пек калапă пирки, пĕтĕм Парттире тăракан çынсем те çавăн пекех шутла пуçланă. Сойуса вăл вăйлăланма питĕ нумай пулăшрĕ.

Р. К. П. 11-мĕш сĭесĕ, çамрăксем хушшинҫе йепле ĕçлесси çинҫен шутласа пăхсассăн кайран, выравсенҫи партипе сойус оркаписатсисене мĕнле майпа мĕн ĕç тумаллине кăтартса панă. Р. Ç. К. сойусĕн 4-мĕш сĭесĕ çамрăксене комунисăм тĕлĕшпе вĕрентсе ӳстерес ĕçе вăйлăлатмалла тенĕ. Р. К. П. 11-мĕш сĭесĕ кун пек калапипех ҫарăнса тăман, вăл ку ĕçе мĕнле майпа туса ĕçе кӳртессине кăтартса панă. Сойуç хушшинҫе туса тăрас ĕçе, малтанхинҫен шутласан, урăхлатмалла. Çамрăксен шухăшĕсене пĕлсе, вĕсем майлă пулса, ĕçлемелле тенĕ.

Кунсăр пуçне тата парттин 11-мĕш сĭесĕ çамрăксем пур те, хĕрлĕ çартисемсĕр пуçне, Раç Ком. парттине кĕрес пулсан, Р. Ç. К. С. урлă кĕреççĕ тесе постановлени йышăннă.

**Проҫапа тариф.** Парттин 11-мĕш сĭесĕ хыççăнах, пур профсойуссен оркаписатсийĕсем те, хуçайствă оркăнĕсем те ĕçлекен çăмрăксен пурăнăçне лайăхлатма тăрăша пуçларĕç. Анҫах сойусăн ĕçне туса тăма çамрăксен проҫăпа тариф кансĕрлесе тăнă. (*Проҫа* тесе происвотствăра ĕçлекен çамрăксен % калаççĕ; *тариф*

тесе ĕçе хакланине калаççĕ). Çапэх та проңа пирки кĕрешнипе Пĕтĕм Раç. Тĕпĕçтăвкомĕ йышăннă постановлени тата Пĕтĕм Раç. профсойуссен тĕп канашĕ тариф çинђен кăларнă постановлени ку инкексене пĕтерсе пыраççĕ. Çавăнпа та сойус ку инкексенђен хăтăлсан, хăйĕн ĕçне урăхла çавăрса йанă, çĕнĕ çулпа пыра пуçланă.

**Сойусăн çĕнĕ çулĕ.** Сойусăн çĕнĕ çулĕ (курс), йе тепĕр майлă каласан, çамрăксен шухăшĕпе майлашни (приспособление) пурăнăçа халĕ анђах кĕрсе пыра пуçларĕ. Ку ĕçре Мускав орканисатси ђи малта пырaт. Пĕтĕм Раççейри сойусăн конференсийĕ (çу уйăхĕн 15 кунĕнђе 1922 çулта пулнă) Сойус туса пынă ĕççене тĕплесе тухаt. Конференсин тĕп шухăшĕсем акă çаксем: еккономиккăшăн çĕнĕ майпа пĕтĕм массăпа тăрăшмалле, кĕрешмелле; ĕçлекен çамрăксемпе пĕрле пулмалла, кулђурăпа политтĕккă ĕçне лайăхрах пĕрлештерсе тумалла. Конференси хыççăнах ĕçлекен çамрăксен происвотствăра «хытă ураланни» сойусăн ĕçне малалла туса пыма нумай пулăшрĕ. Çапла ураланнипе çĕнĕ майпа вĕрентсе ĕçлени çак çура пирĕн орканисатсисене ĕçлеме пăрахасран хăтарђĕ, вĕсем иртнĕ çулла ђарăнса тăнă, халĕ нумай вырăнсенђе ĕçе хĕллехинђен те хытăрах çирĕплетсе йанă. (Р. Ç. К. С. сйесĕ умĕн Т. К. çырнă çыру). Сойус лайăхланнине, çамрăксем пур йенђен те çитĕннине курас тесен, «Çамрăк Комунис» йатлă шурналăн 6-7 №-ђен пуçласа пилĕк № кăна пăхса тухмалла. Йулаш-

ки номерте (15-16) ретакси çапла çырат: Иртнĕ çулсенҫе пирĕн сойус ĕçлекенсемпе хреçҫен çамрăкĕсене йертсе, вĕрентсе тăракан пулҫĕ. Çакна Мускаври оркарисатси 5 çул тултарнă йаҫĕпе тунă уйав (юбилей), тата авăнăн 3 кунĕнҫе пулнă пиг ҫаплă темонстратсисем лайăх кăтартса паҫĕç. (Ку ĕç Мускавра питĕ ăнса пулнă). Халĕ 5-мĕш сиес умĕнҫе пысăк сатаҫ тăрат: парăнмасăр тăнă çĕртен тапăнма тытăнмалла.

**Р. Ç. К. С. ĕçĕ вăйлăланни.** Ĕç сарăлса, аслăланса пырат. Ĕçлекен çамрăксене çутта кăларас ĕç уйрăм палăрса тăрат. Пĕр икĕ çул хушшинҫе хапрăксавăт шкулĕсенҫе вĕренекенсем 50000 çынна çитрĕ. Шкулсем кунсерен лайăхланса, тĕрекленсе пыраççĕ. Ку тĕлĕшрен пĕтĕм Раççейри ĕçлекен çамрăксене çутта кăларас ĕçпе пулнă пĕремĕш сиес питĕ паха пулҫĕ. Вăл сиесре ĕçлекен çамрăксене вĕрентес ĕçе мĕнле тăвассине лайăх кăтартса панă. Тата кунта Мускаври оркарисатси ĕçлени çинҫен калас пулат: çамрăксене комунисăм çинҫен вĕрентсе ӳсгермешкĕн вăл тĕп çурт уçнă. (Ун пек çурт хаҫ пĕтĕм Раççейĕпе те пĕр çавă кăна). Ку çуртра çамрăксене çиçтем тăрăх тĕплĕ вĕрентсе ӳстерме пуçланă. Ку çуртрах тата хапрăксавăт шкулĕсĕр пуçне, 7 çуллă шкул пур, унтан хапрăксавăт шкулĕсенĕн инструктăрĕсене хатĕрлекен Институт та пур.

**5-мĕш сийес.** Пĕтĕм Раç. Çам. Ком. сойусĕсен 5-мĕш сиесĕ ку таранҫен çĕнĕ йĕркепе ĕçленине

шута илсе, сойус малалла мĕнле ĕçлессине кăтартса панă. 5-мĕш сиесри тĕп токлат Н. Пуххарин йулташ çамрăксене комунисла вĕрентсе ӳстерессн çинҫеп тунă токлат пулнă. Ку токлат пирки йышăннă ресоҙутсире çак ĕçсене малтан туса тăма калаĭ: çамрăксене комунисăмла вĕрентмелле, респуплĕкри ĕççене туса тăма уйрăм ăсталăхсене вĕрентмелле, вĕрентессине пурăнăçшăн кĕрешнĕ хушăрах вĕрентмелле, тата халăх хушшинҫи ĕçе кĕрсе ĕçлемелле, тенĕ. Ку ĕççене тăвас тесен, тата çаксемшĕн тăрăшмалла: çамрăксене вĕренӳшĕн хастарлатса йарас пулаĭ, çпетсиалисатсилесе професçи йышăнтарас пулаĭ, çамрăксен кăмăлне курас пулаĭ, вĕсенĕн ҫунне ревоҙутси романттĕкĕ йенне йарас пулаĭ; çамрăксене пролеттари моралĕпе çирĕплетсе, вĕсен ӳтпĕвĕсене те аталантарма тăрăшас пулаĭ. Ытти ĕççене (ĕçлекен çамрăксене çутта кăларассине, йалта ĕçлессине, тата урăххисене те) йепле тăвасси çинҫен, нимрен ытла, вĕсене мĕнле ĕçе кӳртмелли çинҫен шухăшласа, сăмах татса каланă. Сиесре çаксене пурне те çĕнĕ çулпа пырас йенҫен пăхса тухнă.

Пĕтĕм Раç. Ком. Сойусĕсен 5-мĕш сиесрен малтанхи сиессем пĕри те 5-мĕш сиес пек цĕр каварлă, пĕр шухăшлă пулман. 5-мĕш сиесҫен пулнă тĕрлĕ тавлашусем, пăрăнҫăксем вĕсем пур те кунҫен пĕтнĕ. Р. Ç. К. сойусĕ питĕ çирĕпленсе çитнĕ. Вăл ĕçлекенсемпе хреçҫен çамрăкĕсен Р.К.П. пĕрлешсе пĕр канашлă

пулса ĕçленĕ. Раççейри Комуниссен партти ăна çул кăтартса пынă.

Р. Ç. К. С. 5-мĕш сиесĕ хĕрлĕ флотăн шефĕ пулмалла тесе постановлени йышăнҫĕ. Вăрçă вăхăҫĕ иртнĕ пулсан та, сойус питĕ нумай çамрăксене хĕрлĕ çара, тĕрлĕ комантир курсăсене йарса тăҫĕ. 1922 çулта çулла пирĕн сойус хăйĕн ҫленĕсене хĕрлĕ флота темиçе пин çын йаҫĕ. Çавăнпа та сойус хĕрлĕ флот шефĕ пулаҫҫенех, флотпа питĕ çирĕплĕ çыхăнса тăнă.

**Сойус ӳсни.** Р. Ç. К. С. 5-мĕш сиесĕ иртсенех, пирĕн сойус орканисатсисем питĕ вăйлă ӳссе пыраççĕ.

Ку çакăнта кăтартвă ҫыхвăрсенҫен лайăх курăнаҫ:

1. Тонпасри орканисатси 1922 ç. çурла уйăхĕнҫен пуçласа йупа уйăхне çитеҫҫен 100 проҫ. ӳснĕ—6000 çумне тепĕр 6000 хутшăннă.

2. Ивано-Вознеççенскири орканисатси çав хушăрах 31,2% ӳснĕ—2.153 ҫлентен 2.834 çынна çитнĕ.

3. Тверти орканисатси 13,3%—2.837 ҫленген 3.356 çынна çитнĕ.

4. Сараттăври орканисатси 18%—4.228 ҫлентен 4.881 çынна çитнĕ.

5. Йарославри орканисатси çурла уйăхĕнҫен пуçласа ҫӳк уйăхҫен 78,1%—1.178 ҫлентен 2.040 çынна çитнĕ.

6. Воронĕшри орканисатси 29,9%—2.862 ҫлентен 3.919 çынна çитнĕ.

7. Волоктӑри орканисатси 5 хут ӳснӗ.

Сойус ӳсни пуринҫен ытла Канаш ирӗкӗ политтӗккӗ тӗлӗшӗпе ҫирӗпленнинҫен, происвотствӑра ӗҫлекен ҫамрӑксен пурӑнӑҫӗ лайӑхланнинҫен, сойусӑн еккономиккӑ ӗҫӗ сарӑлса пынинҫен, тата сойусри ҫамрӑксем револютси вӑхӑтӗнҫе политтӗккӑ тӗлӗшпе вӑйлӑланнинҫен килет (Сойус ӳсни ҫинҫеп Р. Ҫ. К. С. Т.К-т ҫырнӑ).

**Р. Ҫ К. С-пе ҫамрӑксен комунисла интернатсионалӗ.**

Йулашкинҫен пирӗн Раҫҫейри Ҫ. К. Сойусӗ пӗтӗм тӗнҫери ҫамрӑксен пӗрлешӳвӗнҫе мӗнле ӗҫлесе тӑнине пӑхса тухас пулаӗ. Кунта епӗр Р. Ҫ. К. С. историне вӑхӑтне кура виҫӗ пайа уйӑрӑпӑр: 1) Р. Ҫ. К. С. ҫамрӑксен комунисла интернатсионалӗн пӗрӗмӗш конкресӗҫен туса тӑнӑ ӗҫҫем. 2) Пӗрӗмӗшпе иккӗмӗш конкрес хушшинҫи ӗҫҫем. 3) Иккӗмӗш конкрес хыҫҫӑн тунӑ ӗҫҫем.

„Пирӗн Р. Ҫ. К. Сойусӗ малтанах пӗтӗм тӗнҫери ҫамрӑксен кӗрешӳвӗн ӗҫӗсем мӗнле пынине лайӑх пӗлмен. Сойусӑн 1-мӗш сйесӗнҫе ку ӗҫ мӗнле пыни ҫинҫен каласа кӑна пӗлтернӗ. Р. Ҫ. К. С. 1-мӗш сйесӗ Европпӑри хӗвеланӑҫ йенҫи ҫамрӑксен сотсиалисӑмла орканисатсисемпе лайӑхрах ҫирӗплӗ ҫыхӑну тытса тӑма питӗ кирлӗ тесе ресолутси йышӑннӑ. 1919 ҫулта Раҫҫейри Ҫ. К. С. тӗнҫери ҫамрӑксен кӗрешӳвӗ ҫинҫен тӗплӗрех пӗлме нумай тӑрӑшнӑ. Ҫак 1919 ҫулӑн иккӗмӗш ҫуринҫе Сойус Перлин хулинҫе пулнӑ пӗтӗм тӗнҫери ҫамрӑксен сйесӗнҫе (конкресӗнҫе) ӗҫленӗ. Ҫапла вара вӑл ҫамрӑксен интернатсионалӗн ҫӑн пайӗ пулса тӑраӗ.“

(Р. Ç. К. С. историн теçисĕсем). Çакăнтанпа Р. Ç. К. С. пĕтĕм çамрăксен кĕрешӳвĕнҫе пысăк ĕççем тума пуçлаť (1919 çул, ҫӳк уйăхĕ).

Çамрăксен комунисла интернатсионалĕн Перлинри конкресĕнҫех Раççей телекаҫĕсем ĕçе вăйлăлантарнă. Хĕвелавăç йенҫи оркаписатсисене Раççейри ĕçсем çинҫен пĕлтернĕ. Виççĕмĕш сйес—С йус çамрăксен комунисла интернатсионалĕ çумне хутшăннине йышăнаť. 1920 çулта хĕвелтухăçĕнҫе çамрăксен кĕрешӳвĕ пуçланса кайаť. Вăл ĕçре пуринҫен ытла республĕккă хĕрĕнҫи Туркестанпа Аçерпейтшанти оркаписатсисем питĕ вăйлă тăрăшнă. 1921 çулта çу уйăхĕнҫе Раççейри Ком. Сойусăн конференсийĕ пухăнаť. Ку конференсире пĕтĕм тĕнҫери çамрăксен кĕрешӳвĕ çинҫен пĕлтерсе калапинҫен пуçне, вăл ĕçсене йепле тăвасси çинҫен сӳтсе йавнă. Конференси умĕн сойусăн Т. К-ҫĕ Çам. Ком. Инт-лăн конкресне, тата Инт-лăн Тĕпĕçтăвкомне Мускава куçарас тесе, постановлени йышăннă. Ку постановленине виççĕмĕш сйес йышăннă. Тата сйес хаҫхи вăхăтра çамрăксен кĕрешӳвĕ мĕнле ĕççем тума тăрăшмаллине, тата сойус политтĕкĕ тĕлĕшĕнҫен парттипе йепле килĕштерсе пырассине лайăх кăтартса, татса панă.

„Çамрăксен Комунисла Интернатсионалĕн иккĕмĕш конкресĕнҫе, Раç. Ком. сойус вăйлăланса пыни курăнаť. Пур тавлашусенҫе, тĕрлĕ постановленисенҫе иккĕмĕш конкрес Раççейри Ç.К.С тĕп шухăшĕсене йышăнса пынă"... Çам. Ком. Инт-лĕн Тĕпĕçтăвкомне Мус-

кава куçарни Р.Ç.К.С-не вăйлăлатса хунă. Иккĕмĕш конкрес иртсен Раççейри оркаписатси пур тĕнҫ°ри çамрăксене çул кăгартса пыраканни пулса тăраť.

Краштăн вăрçи вăхăтĕнҫе Раççейри сойус пĕтĕм ĕçлекенсемпе хреçҫен çамрăкĕсен орканисатсийĕ пулса тăнă. Вăл хăйĕн ĕçсемпе те, хурăмĕпе те хĕвеланăç йенҫи орканисатсисенҫен нумай уйăрăлса тăнă.

Хĕвеланăç йенҫе партти орканисатсийĕсем анҫах пулма пуçланă та, питĕ вăйсăр пулнă, партти ĕçне çамрăксен орканисатсийĕсем туса тăнă. Çамрăксен комунусла интернатсионалăн иккĕмĕшпе виççĕмĕш конкресĕсем иртсен, хĕвеланăçĕнҫи орканисатсисем пирĕн сойус пек хурăмланса пыма пуçланă. Вĕсем Р.Ç.К. Сойус ĕçне, вăл мĕн тунине, мĕнле ĕçленине, мĕнле йăнăшсем тунине курнă пирки, хăйсен кĕрешӳ ĕçне лайăхрах туса пыма пулгарĕ, пысăк йăнăшсем тăвасран сыхланса, сахалтарах вăйпа та нумай ĕç тума пулгарĕ.

---